Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Апрель
19
ВЫРСАРНИКУН
№ 78 (8987)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Май уявĕ умĕнхи ăмăрту (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: **Я. Васильев.**—Итоглă занятисене лайăх ирттерер (2 стр.).
Н. Волков.—МТС-ри партилле-политикăлла ĕç (2 стр.).
А. Осокин.—Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне ертсе пырасси — парторганизацисен задачи (2 стр.).
Хамăр республикăра (3 стр.).
АГРОНОМ КАНАШĔ: **Г. Шувалов.**—Гексахлоранпа ытларах усă курар (3 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Фредерик Жолио-Кюри пĕлтерни (3 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ (3 стр.).
Иранри ĕçсем (3 стр.).
А. Александров.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Корейăра перемири тăвасси çинчен калаçусем пуçласа ыйту пирки (4 стр.).
Президент Эйзенхауэр тухса калани (4 стр.).
Гоминдан бандисем киревсĕр ĕçсем тăваççĕ (4 стр.).

Ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслени—организацилле ĕçре чи кирли

Партин XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă задачăсене, Тăван çĕршывра коммунизм тумалли аслă программăна ăнăçлă пурнăçлама партилле-организацилле ĕçе лайăхлатни кирлĕ. Аслă çулпуçсем, парти организаторĕсем Ленинпа Сталин партин организацилле ĕçне яланах малти вырăна хурса хакланă. Политикăлла çулйĕре тĕрĕс кăтартса панă хыççăн организацилле ĕç пурне те, çав шутра политикăлла çул-йĕрĕн кун-çулне те татса парать, тесе вĕрентнĕ. Пирĕн парти, çакна асра тытса, организацилле ĕç парти политикине, парти решенисене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме май паттăр тесе тăрăшать.

Совет çыннисем партипе правительство йышăннă кашни решение, вĕсем кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе пыма хатĕр тăраççĕ. Ĕçĕн тĕп тупсăмĕ—решенисене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынинче. Анчах та партин XIX-мĕш съезчĕ çак ĕçре пысăк ситменлĕхсем пуррине, организацилле ĕçĕн шайĕ пурнăç ыйтнинчен кая юлса пынине палăртрĕ.

Центртан паракан директивăсене тата вырăнта йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес ĕçе начар организациленĕ, çав решенисене мĕнле пурнăçа кĕртнине кирлĕ пек тĕрĕслесе тăманни совет, хуçалăх тата парти организацийĕсен ĕçĕнче час-часах тĕл пулать. Пирĕн организацисемпе учрежденисем чылайăшĕ тĕрлĕ решенисем, директивăсем тата приказсем кирлинчен нумай ытларах кăлараççĕ, анчах вĕсем пурнăçа мĕнле кĕрсе пыни çинчен сахал шутлаççĕ. Кирек мĕнле ыйту тăрăх та тĕрĕс решени йышăнса, ун çинчен пурне те пĕлтерсен, ĕç вара хăй тĕллĕнех пулса пырĕ, тесе шутлакан руководительсем çинчен мĕн каламалла-ха? Ку руководительсем çакна манаççĕ: тĕрĕс решени йышăнни вăл—ĕçĕн пуçламăшĕ çеç, ĕç ăнăçлă пуласси организацилле ĕçсенчен, йышăннă решенисене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешӳ организациленинчен, çынсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухнинчен, ĕç мĕнле пулса пынине тĕрĕслесе тăнинчен килет. Çакна манакан руководительсем ĕçе куллен-кун ертсе пырас вырăнне директивăсем панипех тата резолюцисем çырнипех лăпланса лараççĕ. Вĕсем решенисем нумай йышăнаççĕ, анчах вĕсене пурнăçлассишĕн организаторла ĕç туса пыма шутламаççĕ.

Тĕслĕхрен, партин Пăрачкав райкомне илер. Партилле-политикăлла тата партилле-организаторла ĕçе лайăхлатас пирки райком сахал мар решенисем йышăннă. Пĕлтĕр кăна райком бюровĕ тĕрлĕ ыйтупа пуçламăш парторганизацисен отчетне 43 хут итлесе решенисем йышăннă. Çак шутран 20 решени пирки райкомра нимĕн те паллă мар: пурнăçланă-и вĕсене е пурнăçламан? Тĕрĕсленĕ хыççăн, райком бюровĕ пуçламăш парторганизацисен отчечĕсем тăрăх йышăннă решенисене чылайăшне çав парторганизацисем хăйсен пухăвĕсенче те сӳтсе явманни палăрчĕ.

Пăрачкав райкомĕпе райисполкомĕ ял хуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тумалли çинчен нумай решенисем йышăнаççĕ те вĕсем çинчен часах манаççĕ. Районти чылай колхозсем ял хуçалăх ĕçĕсене кая юлса туни, кăçалхи çуракине япăх хатĕрленни колхозсене кăтартусем сахал панинчен мар, панă кăтартусене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеменнинчен килет.

Йышăннă решенисене пурнăçламашкăн решение пурнăçа кĕртекенсем патне вăхăтра çитермелле, лартнă тĕллеве пурнăçламалли çул-йĕре кăтартса памалла, кирлĕ вăйсене мобилизацилемелле, пулма пултаракан çитменлĕхсене çийĕнчех сирсе пымалла, юлса пыракансене вăхăтра пулăшмалла. Çакăн çинчен манса кайнă та ĕнтĕ Пăрачкав районне ертсе пыракансем.

Ертсе пыракан органсем йышăннă решени мĕнле пурнăçланнине, аппарат йĕркеллĕ ĕçленине е вăл пачах ĕçлеменнине ăна тĕрĕслесе пăхсан кăна пĕлме пулать. Хăшпĕр работниксем çапла шутлаççĕ: руководителĕн ĕçĕ—директивăсем парасси, директивăна пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесси вара—вĕçĕнреххисен ĕçĕ, теççĕ. Кăлас пулать, çакăн пек шухăш, чи малтан, Çĕрпӳ районĕнчи ертсе пыракан юлташсем хушшинче пур. Вĕсем хăйсем йышăннă решенисен кун-çулĕпе питĕ çителĕксĕр интересленеççĕ.

Сталин юлташ çапла вĕрентет: **«...Ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслени усăллă пултăр тесен, сахалтан та икĕ услови кирлĕ: пĕррремĕшĕнчен, ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслессии вăхăтран вăхăта мар, тăтăшах пулса пымалла; иккĕмĕшĕнчен, партипе совет тата хуçалăх организацийĕсен пур сыпăкĕсенче те ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслессине иккĕмĕш вырăнта тăракан çынсем мар, çителĕклĕ авторитетлă çынсем,—организацисен руководителĕсем хăйсем ертсе пымалла».**

Хăшпĕр райкомсемпе райисполкомсем районти парти конференцисен решенийĕсемпе суйлавçăсен наказĕсем çинчен тепĕр суйлав вăхăтĕнче отчет тунă чухне кăна аса илни пачах та тĕрĕс мар. Решенисемпе наказсене мĕнле пурнăçласа пынине куллен тĕрĕслемелле, вĕсене пурнăçлани çинчен вăхăтран вăхăта отчетсем туса парас пулать.

Ĕçе мĕнле тунине куллен тĕрĕслеменни пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсем патне илсе пырать, партипе государство дисциплинине хавшатать. Ялхуçалăх артелĕн Уставне пурнăçлассишĕн кĕрешес ыйтăвах илер. Нумай районсенчи парторганизацисем, партипе правительство кăтартăвĕсене пурнăçласа, артель Уставне çирĕп тытса пымалла, колхозсен обществăлла хуçалăхне пĕрмай ӳстерсе пымалла турĕç. Анчах хăшпĕр районсенче, уйрăмах Хĕрлĕ Чутай районĕнче, çав-çавах артель Уставне пăсаççĕ-ха. Çакă вăл райкомсемпе райсовет исполкомĕсем колхоз строительстви пирки парти панă кăтартусене вырăнсенче мĕнле пурнăçланине яланах тĕрĕслесе пыманнинчен килет.

Ĕçе мĕнле тунине тĕрĕслессин тĕп задачи—ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ майсем йышăнасси, çапла вара ĕçе пĕрмай лайăхлатса пыма условисем туса хурасси пулать. Партин уйрăм комитечĕсем кашни çулах пĕрешкел çитменлĕхсенех тупса палăртаççĕ, анчах çав çитменлĕхсене пĕтерме кирлĕ ĕçсем туса ирттермеççĕ. Хăшпĕр работниксем пĕр-пĕр организацире решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ чухне çитменлĕхсене палăртнипех çырлахаççĕ. Ку вăл пачах çителĕксĕр. Çитменлĕхсене тата вĕсен сăлтавĕсене палăртнă хыççăн, вырăнти работниксене ĕçе лайăхлатма тивĕçлĕ пулăшу памалла.

Парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен партилле-политикăлла ĕçе хуçалăх ĕçĕпе тĕрĕс çыхăнтарса, совет, хуçалăх тата ытти организацисен ĕçне пĕлсе ертсе пымалла. Пирĕн организацисен ĕçĕнче пĕрлĕх пулмасан, партипе государство дисциплинине тата ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç кĕрешсе пымасан, йышăннă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăмасан,—вара решени е пуш сăмах, е чĕнсе калани кăна пулса юлать.

Парти контролĕн рольне чылай вăйлатмалла, парти комитечĕсен организаторла ĕçне партипе правительство решенийĕсене пурнăçлас ĕçе пăхăнтармалла. Решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслес ĕçре пирĕн ертсе пыракан органсен ĕççыннисен йышлă массисем çине, партипе профсоюз, вырăнти Советсен активĕ çине таянмалла. Ĕçе мĕнле тунине çӳлтен тĕрĕсленине аялтан, парти массисемпе партире тăман массăсем енчен тĕрĕсленипе çыхăнтармалла.

Çакна асра тытас пулать: решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслес ĕçĕн тĕллевĕ, чи малтан, çитменлĕхсене тупса палăртасси, закона пăснисене тупасси, тӳрĕ кăмăллă работниксене канаш парса пулăшасси, тӳрленменнисене айăплассии пулать. Решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесси кадрсене суйласа илес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерессипе ним уйрăмми çыхăнса тăрать. Тĕрĕслени результачĕсене кура, япăх ĕçлекен, юрăхсăр, кая юлнă работниксене ĕçрен кăлармалла. Вĕсем вырăнне лайăх ĕçлекен, малта пыракан, государство интересĕсене çирĕп сыхлакан тӳрĕ кăмăллă çынсене уйăрса лартмалла.

Решенисене пурнăçланине тĕрĕслес ĕçе кулленех лайăхлатса пырса, партилле политикăлла ĕçĕн шайне ӳстерсе, хуçалăхпа культура строительствине ертсе пымалли майсене лайăхлатса, Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисене пурнăçлас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвар.

Ĕçе кая хăвармалла мар

ВĂРМАР. План тăрăх районти колхозсен кĕрхи тата çурхи тырăсен калчисене 4.100 гектар çинче, нумай çул ӳсекен курăксене 800 гектар çинче удобренисем сапса памалла.

Çуракине ирттерме тĕплĕн хатĕрленнĕ колхозсем агротехника комплексĕнчи çак ĕçе вĕсне срокра пурнăçларĕç. Калчисемпе курăксене юр кайса пĕтсенех удобренисем пачĕç. «Дружба» колхоз кĕрхи тулăпа ыраш калчисене пурĕ 185 гектар çинче, нумай çул ӳсекен курăксене 40 гектар çинче удобренисем сапса пачĕ, плана ирттерсе тултарчĕ. «Победа» колхоз членĕсем те кĕрхи тырăсен калчине 175 гектар çинче удобрени сапса пачĕç, плана 106 процент тултарчĕç.

Анчах районти нумай колхозсенче тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнакан çак ĕçе вăраха яраççĕ. Апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне районта кĕрхи тырăсен калчисене 1.392 гектар çинче кăна удобренисем сапса панă. Нумай çул ӳсекен курăксене удобрени парассине питĕ кая хăварса пыни сисĕнет.

План тăрăх палăртнă пур ĕçсене те вăхăтра пурнăçлассишĕн кĕрешмелле.

Совет Союзĕ тăрăх



Днепр çинче навигаци пуçланнă. Гидроэлектростанци пĕви патĕнчи шлюз витĕр пăрахутсем ирттеççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: пассажирсем лартса çӳрекен «С. Киров» пăрахут шлюз камеринче.

А. КРАСОВСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ
(ТАСС фотохроники).

Çĕршыври уй-хирсенче

ОДЕССА. Çумăр çунă хыççăн облаçра ăшă çанталăк тăрать. Çĕр ăшăнса çитнĕ. Кăнтăр енчи районсенчи колхозсем кукуруза акма тытăннă.

ТЕРМЕЗ. Сурхан-Дарья облаçĕнчи колхозсемпе совхозсем Узбекистанра чи малтан хлопчатник акмалли плана тултарнă. Çуракине пĕлтĕрхинчен чылай хăвăртрах ирттерне.

АЛМА-АТА. Алма-Ата облаçĕнчи колхозсемпе совхозсем пĕлтĕрхинчен икĕ эрне малтан табак акса пĕтернĕ. Парниксенче табак калчи вăйлă шăтса тухнă. Пур çĕрте те табак лартма тăпрана çемçетсе хатĕрлеççĕ.

Табак плантацийĕсенче ĕçе механизацилесси чылай ӳснĕ. МТС-сем колхозсемпе тунă договорсенче табак лартнă вырăнсене тракторпа виç-тăват хут çемçетме палăртнă. Кăçал табак калчине кăларса лартас ĕçе малтанхи хут машинăсемпе тăваççĕ.

ЧКАЛОВ. Облаçри колхозсем арбуз нумай лартаççĕ. Колхозниксем арбуз хăвăртрах пиçсе çитмелле тăваççĕ. Арбуз вăррине малтанах лартса шăтараççĕ, калчине хутран тунă стакансенче ӳстереççĕ. Çанталăк ăшăтсанах калчасене кăларса лартаççĕ. Çапла арбуз 40 кун маларах пулса çитет.

Апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС).

Атăл çинчи аслă стройкăра

ВОЛЖСКИЙ ПОСЕЛОКĔ (Сталинград облаçĕ), апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Атăлпа Ахтуба айлăмĕнче, Сталинград гидроэлектростанцине тунă тĕлте, Атăл çинче пăр каять. Шыв кашни кунах хушăнса пырать. Атăл тăрăх юхса килекен пăрсем Песчанăй утрав çине пырса тăрăнаççĕ. Гидроэлектростанци строителĕсем Атăл шывне юхса тăма ансăр вырăн çеç хăварнă. Çак вырăна пĕрмаях пăрсем пырса капланаççĕ. Кунта «Направник» ятлă пăрахут дежурствăра тăрать. Унăн экипажĕ пăрсене сиктере-сиктере ярса ваклать. Атăлпа Ахтуба айлăмĕнче кĕрĕслетнĕ сасăсем илтĕнсе тăраççĕ.

Сталинград гидроэлектростанцине тăвакансем çурхи шыва лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Гидроэлекстростанци пулмалли вырăна тата айлăмлă вырăнта лартнă пулăшуллă предприятисене çурхи шыв илесрен лайăх хӳтĕленĕ. Строительство районне çурхи шывран хӳтĕлеме 25 километр тăршшĕ дамба тата перемычкăсем тунă.

Строительсем Песчанăй утрав районĕнче питĕ ответлă ĕç тăваççĕ. Кунта гидроэлектростанци çурчĕ пулмалли вырăнта котлован чаваççĕ. Ку вырăна хӳтĕлеме металл юпасем çапса 1,5 километр тăршшĕ перемычка тунă. Перемычка айккисене чулпа хытарнă тата бетон сарнă.

Гидроэлектростанци котлованне чавнă çĕрте ĕç сарăлсах пырать. Перемычка тăрăх чугун çул хывнă. Çак чугун çул тăрăх килекен поездсем механизмсем, оборудовани тата строительство материалĕсем илсе килеççĕ. Котлованран 4 миллион кубометр тăпра чавса кăларнă. Халĕ кунта икĕ земснаряд ĕçлет. Вĕсенчен пĕри—питĕ хăватлă агрегат, вăл кашни сехетре пин кубометр тăпра чавса кăларать.

Земснарядсен экипажĕсем стахановла ĕçлеççĕ. Вĕсем, Май уявĕ умĕнхи вахтăна тăнăранпа, ĕç хăвăртлăхне ӳстерсех пыраççĕ. 321-мĕш номерлĕ земснаряд экипажĕ çак кунсенче апрельти плана тултарнă,—ăна коммунист Петр Тихоненков ертсе пырать. Земснаряд экипажĕ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе апрель уйăхĕ вĕçлениччен татах тепĕр уйăх планне тултарма пулнă.

Вырăс ученăйĕсем пенициллин тăвас тĕлĕшпе ĕçлени

СССР Медицина наукисен Академийĕн президиумĕ, СССР Сывлăх министерствин ученăй совечĕ, Пĕтĕм Союзри дерматовенерологи научнăй обществин правленийĕ тата Пĕтĕм Союзри микробиологсен, эпидемиологсен, инфекционистсен наукăлла обществисен правленийĕ апрелĕн 15-мĕшĕнче пĕрлешӳллĕ лару ирттернĕ. Ларăва вырăссен паллă ученăйĕ А. Г. Полотебнов вилнĕренпе 45 çул çитнĕ май пухнă. Ларура СССР Медицина наукисен Академийĕн президенчĕ Н. Н. Аничков, Сывлăха сыхлассине организацилес тата медицина истори тĕлĕшпе ĕçлекен Семашко ячĕпе тăракан институтăн директорĕ Е. Д. Ашурков, СССР Медицина наукисен Академийĕн член-корреспонденчĕ З. В. Ермольева сăмах каланă. Вĕсем А. Г. Полотебновăн паха ĕçĕсем çинчен, вăл этем ӳт-тирĕн чирĕсемпе кĕрешекен наукăна (дерматологие) пуçласа яни çинчен, вăл никамран малтан чирсене симĕс пăнтăхпа (зеленая плесень) сыватма май пуррине пĕлни çинчен каласа панă.

Симĕс пăнтăх тĕрлĕ чирсене пĕтерме пултарнине А. Г. Полотебнов никамран малтан сиснĕ, çав симĕс пăнтăх организма чире яракан нумай йышши бактерисене вĕлерсе пĕтернине пĕлнĕ. Хăйĕн сăнавĕсене тунă чухне А. Г. Полотебнов симĕс пăнтăх тир чирĕсене çеç мар, тарăн сурансене сыватма тата операцисем тунă чухне те усăллă пулмалла тесе тĕрĕс шухăшланă.

А. Г. Полотебнов пенициллинпа усă курма пуçличчен 70 çул маларах симĕс пăнтăхран тăвакан антибиотиксемпе усă курма пĕлнĕ. А. Г. Полотебнов, В. А. Манассеинпа тата ытти вырăс ученăйĕсемпе пĕрле, антибиотиксемпе тĕрлĕ чирсенчен сыватассине пуçласа янă, пенициллина тупас патнех çитнĕ.

Халĕ совет ученăйĕсем тата урăх çĕршывсенчи ученăйсем те питĕ вăйлă антибиотик—пенициллин тума пĕлеççĕ. Ăна симĕс пăнтăхран уйăрса кăлараççĕ. Çапла эпир симĕс пăнтăхпа тата пенициллинпа усă курассине чи малтан вырăс ученăйĕсем пуçласа янине куратпăр.

(ТАСС).

Горняксем автомашина туянаççĕ

КРИВОЙ РОГ, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Киров ячĕпе тăракан шахта бурильщикĕ П. Руденко автоинспекцире хăй çак кунсенче туяннă «Москвич» автомашинăна регистрациленĕ. Çавăн пекех Роза Люксембург ячĕпе тăракан рудникра ĕçлекен бурильщик Ф. Шовкопляс, çак рудникри сăрт-ту ĕçĕн мастерĕ Ф. Ефанов, Дзержинский ячĕпе тăракан рудникри механик М. Шох тата ыттисем те автомашинăсем туяннă.

Хальхи вăхăтра Кривой Рог бассейнĕнче ĕçлекен 550 горняк «Москвич» тата «Победа» машинăсем, пин ытла горняк—мотоциклсем тытаççĕ.

Мускав облаçĕнчи Серпухов районĕнче пур колхозсемпе МТС-сенче те электричество тата радио пур. Клубсемпе хĕрлĕ кĕтессенче телевизор лартаççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Двориковри МТС хĕрлĕ кĕтесĕнче. Радиотехник Н. В. Ткачев телевизор лартать.

В. ХУХЛАЕВ фотоӳкерчĕкĕ
(ТАСС фотохроники).

Политехнически музей 80 çул тултарнă

Апрелĕн 17-мĕшĕнче политехнически музейра ученăй совечĕн ларăвĕ пулнă. Музей 80 çул тултарнă ятпа ирттернĕ ларăва Б. Н. Юрьев академик председатель пулса ертсе пынă.

Музей историйĕ çинчен ученăй совет президиумĕн членĕ Б. В. Лавровский доклад тунă. Малта пыракан вырăс ученăйĕсем пуçарнипе 1872 çулта Пĕтĕм Россиăри политехника выставки уçăлнă, çав выставка музей уçмалли никĕс пулса тăнă. Музей аудиторийĕсенче вырăссен паллă ученăйĕсем Жуковский, Тимирязев, Лебедев, Сеченов, Яблочков лекцисем вуланă тата сăнавсем туса ирттернĕ. Музей пĕрмаях çĕнĕ машинăсемпе, станоксемпе, приборсемпе, инструментсемпе пуянланса пырать. Кунта чаплă выставкăсем тунă. 80 çул хушшинче музейра 21 миллион çын пулнă, вăл шутран 15 миллион çын Совет влаçĕ пулнăранпа пырса курнă.

Музей директорĕ Н. Н. Поздняков «Политехнически музей — наукăлла-техникăлла пропагандăн пысăк центрĕ» темăпа доклад тунă.

Лару вăхăтĕнче П. И. Чайковский çырнă кантатăна вылясa панă, ăна вырăссен аслă композиторĕ 1872 çулта Пĕтĕм Россиăри политехника выставки уçăлнă ятпа çырнă. (ТАСС).

МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ ĂМĂРТУ

Рабочисен активлăхĕ ӳсет

ÇĔМĔРЛЕ. Йывăç япаласем тăвакан завод кăçалхи тăватă уйăхри производство планне апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, завод коллективĕ тата тухăçлăрах ĕçлеме, продукци пахалăхне лайăхлатма, материалсем перекетлеме социализмла обязательствăсем йышăнчĕ. Вăл обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пырать.

Коллективăн творчествăлла пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ тата активлăхĕ ӳссе пынине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Елĕкрех уйрăм рабочисем цех тата завод мĕнле ĕçленипе сахал интересленетчĕç. Халĕ кашни рабочи, мастер тата служащи тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе, коммунизмăн аслă стройкисене тăвас ĕç мĕнле пынипе, цех, завод мĕнле ĕçленипе—пур ыйтусемпе те тимлĕн интересленет. Пиллĕкмĕш цехра лекцисем, калаçусем, докладсем питĕ активлă иртеççĕ.

Рабочисен, инженерсемпе техниксен тата мастерсен активлăхĕпе ответлăхне ӳстерсе пырас ĕçре социализмла ăмăрту итогĕсене куллен пăхса тухни, паха тĕслĕхсемпе çитменлĕхсене тĕплĕн тишкерсе тухни пысăк вырăн йышăнать. Çапла туни паха опытсемпе примерсене пĕтĕçтерсе сарма, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшать тата коллектива производствăна ертсе пырас ĕçе хастарлăрах хутшăнма пулăшать. Производствăлла канашлусенче рабочисем бригадирсемпе мастерсене, цех руководителĕсене критиклеççĕ, технологие çĕнетсе лайăхлатма, шалти резервсемпе лайăхрах усă курма пулăшакан паха сĕнӳсем пăраççĕ.

Хӳмхантаракан ыйтусене пĕрле пухăнса сӳтсе явни юлса пыракансене малта пыракансемпе танлашма, дисциплинăна çирĕплетме, лайăх ĕçлекенсене тата авантарах ĕçлеме пулăшать.

Т. ЕРОПЛАН.

Плана срокчен тултарассишĕн

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри тимĕрçĕ цехĕ пĕррремĕш кварталти производство планне срокчен тултарчĕ, планран ирттерсе чылай детальсем туса кăларчĕ. Апрель уйăхĕнче те цех коллективĕ пысăк çĕкленӳпе ĕçлет, плана апрелĕн 26-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешет.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура хула Совечĕн депутачĕ Дюжев юлташ ертсе пыракан тимĕрçĕсен бригади уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартать. Çак бригада ăмăртура темиçе хутчен те мала тухнă, дирекципе завкомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă. Бригада членĕсем оборудование татти-сыпписĕр ĕçлеттереççĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли çĕнĕрен те çĕнĕ мелсем шыраççĕ. Май уявĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăнă хыççăн, бригада час-часах задание 200 процент таран пурнăçласа пырать, паха детальсем çеç туса кăларать.

Беляев мастер ертсе пыракан участокра ĕçлекен рабочисем пурте стахановецсем е ударниксем. Козина прессовщица, Федотова гайкорезчица, Моноскин прессовщик ĕç нормине куллен 170—180 процент таран тултарса пыраççĕ.

Цех коллективĕн творчествăлла пуçарулăхĕ куллен ӳссе пынине рабочисем рационализаторла сĕнӳсем нумай панинчен те курма пулать. Техника пайĕнче ĕçлекен Григорьев юлташ халиччен юрăхсăр шутланнă тимĕртен пĕр йышши деталь туса кăларма сĕнчĕ. Çак сĕнĕве пурнăçа кĕртни кашни уйăхра 240-шер килограмм тимĕр перекетлеме май парать. Лукин мастер технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма пулăшакан паха сĕнӳ пачĕ.

И. МАРКОВ.

Канаш хулинчи индпошив мастерскойĕнче Май уявĕ умĕнхи ăмăрту анлă сарăлнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Н. Я. Архипова çĕвĕç ĕçре. Вăл ĕç нормине кулленех 120—130 процент тултарать. Архипова юлташ каçхи вăтам шкулта 8-мĕш класра ăнăçлă вĕренет.

П. КОЛЬЦОВ
фотоӳкерчĕкĕ.

Ăмăрту вăйланать

Сĕнтĕрти райпромкомбинат коллективĕ пĕррремĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана 135 процент тултарчĕ. Уйрăмах çĕвĕ мастерскойĕ лайăх ĕçленине палăртас пулать.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, Н. Сучков закройщик, М. Куликова, Е. Сидорова çĕвĕçсем тата ыттисем те ĕç нормине 175—200 процент таран тултарса пыраççĕ, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăваççĕ, материалсем чылай перекетлеççĕ, хăйсен опычĕпе ыттисене паллаштараççĕ.

Райпромкомбинат коллективĕ уйăхри плана апрелĕн 26-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, ĕççыннисен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерессишĕн ырми-канми кĕрешет.

В. САПТЕЕВ.

* * *

ИШЛЕИ. Чаканарти «Победа» промартель кăçалхи тăватă уйăхри производство планне мартăн 20-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, артель çĕнĕ çитĕнӳ турĕ: апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне иккĕмĕш кварталти плана 80 процент тултарчĕ. Ĕçре уйрăмах И. Щербаков, А. Мастеров, Я. Яландаев, П. Пономарев юлташсем паха тĕслĕх кăтартаççĕ, ĕç нормине куллен 200 процент таран тултараççĕ.

«Победа» артель коллективĕ çулталăкри производство заданине Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă тĕле пурнăçлама сăмах пачĕ.

Инвалидсен «Красный стрелок» артелĕ апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне уйăхри плана ирттерсе тултарчĕ, халĕ çитес уйăхшăн продукци туса кăларать.

Ф. МАЛЫШКИН.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Итоглă занятисене лайăх ирттерер

Коммунистсемпе кадрсене марксистла-ленинла пĕлÿсем парасси партин идеологилле пĕтĕм ĕçĕсенче тĕп вырăн йышăнать. Идеологилле ĕç партин чи пирвайхи обязанноçĕ пулнине XIX-мĕш съезд тепĕр хут кăтартса пачĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисене пурнăçласа, пирĕн республикăри парти организацийĕсем идеологилле ĕçе тивĕçлипе хаклама тытăнчĕç. Вĕсем И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ произведенине, вăл съездăн юлашки ларăвĕнче каланă сăмаха, XIX-мĕш съезд решенийĕсемпе материалĕсене пропагандăлас ĕçе анлăн туса пыраççĕ.

КПСС чылай райкомĕсемпе хула комитечĕсем партилле пропаганда ыйтăвĕсене пленумсенче тата актив пухăвĕсенче сÿтсе ярĕç. И. В. Сталин юлташ экономика ыйтăвĕсем пирки çырнă произведенине тата партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вĕренме тытăннă май, занятисен идейăлла-политикăлла пахалăхĕ чылай лайăхланчĕ, вĕренекенсен активлăхĕ те палăрмаллах ÿсрĕ. Марксистла-ленинла вĕренĕве нумай парторганизацисем коммунизм строительствин практикăлла задачисемпе тачă çыхăнтарса пыраççĕ. Коммунистсемпе мĕнпур ĕçсыннисене совет патриочĕсем пулма, Совет государствин оборонине пур майсемпе те çирĕплетме, политика тĕлĕшпе сыхă пулма воспитани парас ыйтусем те политикăлла вĕренÿре хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕç.

Çав вăхăтрах политшкулсемпе кружоксен ĕçĕсенче çитменлĕхсем те чылай. Партилле вĕренĕве çĕнĕ программăпа йĕркелес ыйтусене партин Октябрьски, Вăрнар райкомĕсем пленумсенче сÿтсе ярĕç. Çав пленумсенчен акă мĕн курăнчĕ: занятисен теорилле пахалăхĕ халĕ те çителĕксĕр-ха, марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем хăйсен пĕлĕвĕсене мĕнле ÿстерсе пынине тĕрĕслес ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен.

Халĕ республикăри парторганизацисем 1952—53 вĕренÿ çулне вĕçлеме хатĕрленеççĕ. Иртнĕ çулсенчи пекех, занятисем ялсенчи парторганизацисенче май уйăхĕн вĕçĕнче, хуласенче — июнь уйăхĕнче вĕçленмелле.

Вĕренÿ çулне ăнăçлă вĕçлесси партилле пропаганда ĕçĕнчи ответлă тапхăр пулса тăрать. Политшкулсемпе кружоксенче — итоглă занятисем, марксизм-ленинизм университечĕсенче, каçхи партшкулсенче — вĕренÿ планĕ тăрăх экзаменсемпе зачетсем, марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсемпе калаçусем ирттермелле. Çакă вăл, вĕренекенсен пĕлĕвĕсене палăртма май панипе пĕрлех, пропагандист ĕçне, партилле пропагандăна парти райкомĕсемпе хула комитечĕсем тата пуçламăш организацисем мĕнле ертсе пынине хаклама май парать.

Занятисене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттересси, марксистла-ленинла теорие парти задачисемпе тачă çыхăнтарасси партилле пропаганда ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнмалла. Çулталăк хушшинчи политикăлла вĕренĕвĕн результачĕсене палăртнă чухне çавна тĕплĕн шута илни кирлĕ. Итоглă занятисем вĕреннĕ материала тĕплĕнрех ăнланса илме пулăшмалла. Çавăнпа пĕрлех вĕсем марксистла-ленинла теорие творчествăллăн вĕренес тĕлĕшпе коммунистсен ответлăхне ÿстерме пулăшмалла.

Итоглă занятисене вĕренÿ программин тĕп ыйтăвĕсем тăрăх калаçу меслечĕпе ирттерес пулать. Сăмахран, Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездне Центральнăй Комитет ĕçĕсем çинчен туса панă доклад тăрăх çакăн пек тĕп ыйтусем сĕнме пулать:

1. Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвĕ.
2. Совет Союзĕн шалти лару-тăрăвĕ.
3. Коммунистсен партийĕ—совет обществин ертсе тата çул кăтартса пыракан вăйĕ, ССР Союзĕнчи коммунизм строительствин организаторĕпе хавхалантаракане.

Кунта тĕп ыйтусене кăна илсе кăтартнă. Çак ыйтусене тĕп вырăна хурса, пропагандист вĕренекенсене ытти ыйтусем те пама пултарать. Анчах тĕп ыйтусенчен пăрăнма кирлĕ мар.

Иртнĕ çулхи опыт итоглă занятисем ирттермелли тематикăна тата вĕренекенсене памалли ыйтусене пропагандистсен семинарĕсенче сÿтсе явма кирлине кăтартса пачĕ. Вĕренекенсем хăш темăна мĕнле ăнланса илнине шута илсе, пропагандист çав ыйтусене улăштарма та пултарать. Пĕр итоглă занятире 5—6 ыйтуран ытла сÿтсе явма кирлĕ мар. Пĕр занятире унтан ытларах ыйтусем сÿтсе явма юрамасть, çавăн пек тĕслĕхсем иртнĕ вĕренÿ çулĕнче, сăмахран, Советски районĕнче пулнă. Çапла туни вăл ыйтусене çиелтен кăна çутатса парасси патне илсе пырать.

Вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçлеме хатĕрленес ĕçре итоглă занятисене хăçан ирттермеллине палăртса хуни те паллă вырăн йышăнать. КПСС хула комитечĕсемпе райкомĕсем кашни шкул, кружок тата семинар хăйсен вĕренÿ программине мĕнле пурнăçласа пынине шута илмелле. Хăшпĕр политшкулсемпе кружоксенче, вĕренÿ программи пурнăçланманнине курса, материала васкаса вĕренме тытăнаççĕ, эрнере икшер занятти ирттереççĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем, сăмахран, Красноармейски районĕнче пур. Программăна пĕтĕм вĕренÿ çулĕнче кирлĕ пек пурнăçласа пымалла. Çакă вăл занятисене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттерме май паракан условисем пулса тăрать. Анчах, занятисем расписанире кăтартнă чухлĕ пулайман пулсан, вĕренÿ çулĕ вĕçленеспе тин васкани вăл занятисен идейăлла пахалăхне чакарать кăна. Программăри темăна вĕренсе пĕтереймен пулсан, ялсенчи политшкулсемпе кружоксенче итоглă занятисене июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче те ирттерме юрать. Пропагандистсем программăна васкаса вĕренсе пĕтерме хăтланни çинчен калакан тĕслĕхсене парторганизацисен çийĕнчех асăрхаса илмелле. Ун пек çитменлĕхсем нихăш политшкулпа кружокра та ан пулччăр.

Итоглă занятисен ăнăçлăхĕ, паллă ĕнтĕ, пропагандистсемпе вĕренекенсем вĕренÿ çулĕнче мĕнле ĕçлениччен, парторганизацисем политикăлла вĕренĕве мĕнле ертсе пынинчен килет. Халĕ, вĕреннине çирĕплетсе хăварас тата вĕренÿре пулнă çитменлĕхсене пĕтерес тесе, вĕренекенсене пулăшас ĕçе вăйлатмалла, вĕсем валли тăтăшах консультацисемпе лекцисем ирттермелле. Итоглă занятисем ирттерме хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен пропагандистсемпе консультантсенчен отчетсем итлени те усăллă.

Итоглă занятие пропагандист малтанхи сăмах каланипе уçать. Занятисенче парти райкомĕн е хула комитечĕн представителĕсем пулаççĕ, анчах калаçăва пропагандист хăй ирттерет. Калаçăва вĕренекенсене пурне те хутшăнтарма пропагандист условисем туса пама тивĕç. Занятире вĕренÿ вăхăтĕнче усă курнă нагляднăй пособисем тата географи картти пулмалла.

Итоглă занятисем вĕçленес умĕн пропагандист кашни вĕренекенĕн пĕлĕвĕсем çинчен, вăл марксизм-ленинизм никĕсĕсене вĕренес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен, политикăлла вĕренÿ ĕçри тата политикăлла активлăха ÿстерме мĕнле пулăшни çинчен каласа парать. Пропагандистăн вĕренекенсене марксистла-ленинла теорипе хĕçпăшалланас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме хавхалантармалла.

Чылай коммунистсем марксистла-ленинла теорие харпăр хăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Вĕсемпе хăйсем вĕреннĕ произведенисем тата темăсем тăрăх юлташла калаçусем ирттермелле.

Вĕренÿ çулĕн итогĕсене парти пухăвĕсенче сÿтсе явас пулать. Лайăх опыта пĕтĕçтерни, çитменлĕхсене кăтартса пани çĕнĕ вĕренÿ çулне ăнăçлăн хатĕрленсе çитме, коммунистсемпе партире тăманнисен политикăлла пĕлĕвĕсене малалла ÿстерме пулăшĕ.

Итоглă занятисене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттересси, вĕренÿ çулне ăнăçлă вĕçлесси—парти организацийĕсен ответлă задачи. Çак задача парторганизацисем умне пысăк ыйтусем кăларса тăратать, вĕсен пропагандистсене пулăшас ĕçе татах та вăйлатмалла, лекцилле пропагандăна анлăнрах туса пымалла тата парти комитечĕсен библиотекисен ĕçне лайăхлатмалла. Политикăлла вĕренÿ мĕнле пынине тата унăн пахалăхне, тĕрĕслессине, харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслессине малалла вăйлатни кирлĕ.

Я. ВАСИЛЬЕВ.



Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи рабочисем КПСС XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене тăрăшса вĕренеççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: М. Хрисановăпа В. Митрофанова стахановкăсем хĕрлĕ кĕтесре партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вулаççĕ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне ертсе пырасси—парторганизацисен задачи

Калинино районĕнчи колхозсенче культура учрежденийĕсен хисепĕ вăраххăн ÿсет. Юлашки виçĕ çул хушшинче Хрущев ячĕпе тăракан тата «Трактор» колхозсенче çеç çĕнĕрен клубсем туса лартнă. Хăшпĕр колхозсенче клубсене япăхтарса янă. «Комсомолец», Каганович ячĕпе, Свердлов ячĕпе тăракан колхозсенче клубсенчен склад тата кайăк-кĕшĕк витисем туса хунă пулнă.

Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатасси кадрсенчен килет. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче вăтам шкултан вĕренсе тухнă çынсем ĕçлемелле. Районти культурăлла çутĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсенчен 13 çын вăтам шкултан вĕренсе тухман.

Культурăпа çутĕç пайĕ çынсене ĕçе уйăрса лартасси тата вĕсене воспитани парасси çине тимлĕ пăхмасть. Çавăнпа та хăшпĕр работниксем хăйсене хушнă ĕçе тивĕçлипе тумаççĕ. Çакнашкал работниксен шутне Çавалкассинчи клуб заведующийĕ М. Фадеев, Чăраш Ишекри М. Григорьева, Уйкас Юнтапари клуб заведующийĕ М. Медведев юлташсем кĕреççĕ. Иртнĕ çулта 13 работник улшăннă, вĕсенчен чылайăшне япăх ĕçленĕшĕн вырăнтан кăларнă.

Культурăпа çутĕç учрежденисен хиселлĕ задачи вăл—ĕççыннисене партипе правительство политикине, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене ăнлантарса парасси, çĕнĕ пилĕк çуллăх плана срокчен тултарас ĕçре малта пыракансен пахаопытне сарса парасси. Услапа ялĕнчи библиотека съезд материалĕсен выставкине тунă. Аçăмçырмари клуб та колхоз ĕçченĕсене съезд решенийĕсем çинчен лайăх ăнлантарать. Анчах Чăраш Хирлепри, Ермошкăри, Мăн Явăшри культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсем ку ĕç çине çителĕклĕ пăхмаççĕ. Унта нимĕнле нагляднăй агитаци те çук.

Ялти библиотекăсенче кĕнекесене пропагандăлас тата вулакансен йышне ÿстерес ĕç начар пырать. Вĕсем вулакансен конференцийĕсене ирттермеççĕ. Çавăнпа та библиотекăсенче шкул ачисемсĕр пуçне урăх никама та курма çук.

Юманайри, Аçăмçырмари, Алгазинăри лекторсен пĕрлешĕвĕсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем иртнĕ çулта 40—80-шар лекцисемпе докладсем туса панă. Кунта кăçал та 8—10-шар докладсемпе лекцисем вуласа панă. Çав хушăрах Сăкăтри, Шăхальри, Ермошкăри, Мăн Явăшри, Çавалкассинчи, Юнтапари лекторсем иртнĕ çулта ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе пĕр лекци те туса паман. Районти культурăпа çутĕç учрежденийĕсен пайĕ çумĕнчи лекторсен ушкăнĕ те çителĕклĕ ĕçлемест. Унти лекторсем Г. Степанов, М. Сорокин, И. Табаков иртнĕ кварталта пĕр лекци те вуласа паман. Ял хуçалăх специалисчĕсемпе медицина работникĕсене лекцисем вулас ĕçе хутшăнтарман.

Парти райкомĕн черетлĕ пленумĕ районти культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ решени йышăнчĕ. Малашне чи кирли вăл—йышăннă решение пурнăçласси, ăна пурнăçланине райком енчен тăтăшах тĕрĕслесе тăрасси пулать.

А. ОСОКИН.

Редакцине килнĕ çыру

Строительствăна хăвăртлатмалла

«Мебельстрой» трестĕ Сĕмĕрлери комбинат çумĕнче ятарласа 32-мĕш номерлĕ строительствăпа монтаж управленине туса хунă.

Мĕнле пурнăçласа пырать-ха хăй умĕнче тăракан задачăна çак строительствăпа монтаж управленийĕ? Тÿрех калас пулать: тÿсме çук япăх. Вăл строительство планне уйăхран уйăха, кварталтан квартала тултарса пыраймасть. Пĕлтĕр управлени плана 32,8 процент кăна тултарнă. Кăçал та начар ĕçлет. Икĕ уйăх хушшинче квартал планне 23,7 процент кăна тултарнă.

Паянхи куна вăл чылай участоксенче строительство ĕçĕсене пуçлама пултараймасть. Управлени руководителĕсем — начальникĕ М. Шереметьевпа главнăй инженер Ф. Фауст юлташсем ĕçре ответлăха туймаççĕ. Управленине пĕлтĕр техникум, вăтам шкул, поликлиника, ача сачĕпе ясли лартма укçа уйăрса панă. Вĕсене тума тытăнман та. Асăннă руководительсем рабочисем валли ĕçлеме тата пурăнма паха майсем туса пама тăрăшмаççĕ. Çавăнпа рабочисем час-часах улшăнса тăраççĕ.

Строительствăпа монтаж управленийĕнче çирĕп дисциплина çук. А. Данилкина бухгалтер, В. Самойлов инженер час-часах ÿсĕр çÿреççĕ, ĕçе тухмаççĕ. Мартăн 14-мĕшĕнчен пуçласа 21-мĕшĕччен Самойлов инженер ĕçе пачах тухман. Ертсе пыракан работниксем çавăн пек йĕркесĕр хăтланни рабочисен дисциплинине хавшатать. Управлени ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана 81,5 процент кăна тултарнă, планран ирттерсе 218 пин тенкĕ ĕç укçи расходланă, 308 пин тенкĕ убыток тунă.

Строительствăра йывăç материалсемпе цемент çителĕклĕ, чул, кирпĕч, известь тата ытти материалсем çитмеççĕ. Управлени руководителĕсем кирлĕ материалсем вăхăтра кÿрсе килме тăрăшмаççĕ. Управленире снабжени енĕпе ĕçлекен çын çук.

Прорабсемпе бригадирсем материалсене расходлани çинчен актсем çыраççĕ. Главнăй инженер Фауст юлташ çав актсене вырăна тухса тĕрĕслемесĕрех çирĕплетет. Çавăн пирки хăшпĕр чухне актсене тĕрĕс мар çыраççĕ. Общежити тунă çĕрте 1952 çулхи декабрь уйăхĕпе 1953 çулхи январь уйăхĕнче 89,5 кубометр йывăç, 34,5 кубометр хăма, 90 килограмм пăта, 17 тăваткал метр кантăк пĕтернĕ имĕш. Кунта пурĕ те 88 никĕс юпи вырнаçтарнă. 90 кубометр йывăç расходласа çурт кăшкарне хăпартнă. Анчах пĕр хăма та çапман, чÿречисене те лартман.

Металл цехĕ валли çурт тунă çĕрте пĕчĕк пÿрт тунисĕр пуçне тата йĕри-тавра хăпарма тунă вăхăтлăх пусмасемсĕр пуçне йывăç ниçта та кайман. Акт çине 98 кубометр йывăç, 380 килограмм пăта расходланă тесе çырнă. Апла пулин те çак ултавлă акта Фауст çирĕплетнĕ.

Çакăн пек йĕркесĕр ĕçлесе пынине пула строительствăпа монтаж управленийĕ финанс тĕлĕшпе калама çук пысăк йывăрлăха кĕрсе ÿкнĕ. Материалсене мĕнле расходланине тимлĕн тĕрĕслесе тăни, вĕсене перекетлессишĕн кĕрешни кирлĕ.

Управлени ĕçĕнчи тепĕр çитменлĕх вăл — йывăр ĕçсене механизацилеме тăрăшманни. Механик вырăнĕнче ĕçлекен П. Баранов юлташ айăпĕпе икĕ транспортера тата грави сортлакан машинăна вырнаçтарса ĕçе яман. Бетон çăракан машинăна çаплах юсаса пĕтермен. Хăма çуракан рама ахаль ларать.

Строительство ĕçĕ мĕнле пынипе комбинатри партбюро интересленмест теме çук. Вăл хăйĕн ларăвĕсенче ку ыйтăва час-часах сÿтсе явать. Строительствăпа монтаж управленийĕн руководителĕсем бюро йышăннă решенисенчен тивĕçлĕ вывод тумаççĕ, вĕсене пурнăçлассине хăйсен таса тивĕçĕ вырăнне хумаççĕ.

Строительствăпа монтаж управленинчи парторганизаци рабочисем хушшинче партилле-политикăлла ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Социализмла ăмăртăва ертсе пымаççĕ, кăтарту хăмисемпе хисеп хăмисем çук, боевой листоксем кăлармаççĕ.

Н. ПЕРШИН,
инженер-плановик.

Районти хаçат ĕçне лайăхлатассишĕн

ЧКАЛОВСКИ. КПСС райкомĕн пленумĕ районти «Авангард» хаçат ĕçĕ çинчен сÿтсе явrĕ.

Хаçат юлашки вăхăтра чылай лайăхланнă, уйрăмах вăл ял хуçалăхĕнче малта пыракансен опытне сутатас ĕçе тĕплĕнрех туса пыма тытăннă.

Çакăнпа пĕрлех пленум районти хаçат ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Хаçат район пурнăçĕнчи чылай ыйтусене вăхăтра çутатмасть. Ял хуçалăх артелĕн Уставне пăсакансене хирĕç начар кĕрешет. Хăшпĕр колхозсем мĕншĕн юлса пынине хаçат тĕплĕн кăтартса памасть. КПСС райкомĕн тата райсовет исполкомĕн ответлă работникĕсем район хаçачĕ çине хутран-ситрен çеç çыраççĕ.

Юлашки вăхăтра районти хаçатра фельетонсем час-часах пичетленсе тухма пуçларĕç. Çав фельетонсенчи фактсем тĕрĕс пулсан та, КПСС райкомĕн бюровĕпе райсовет исполкомĕ айăплисем пирки ытла та çемçе мерăсем йышăнаççĕ.

Пленум районти хаçат ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

А. СЕЛЕНИН.

„Агитатор блокночĕн“ черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» 8-мĕш номерĕ пичетленсе тухнă. Унта пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен уявĕ—Майăн Пĕрремĕшĕ çинчен докладсемпе калаçусем ирттермелли материал пичетленнĕ.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен семинарĕ

ОКТЯБРЬСКИ. КПСС райкомĕнче ĕçлекенсем хăйсен идейăлла-теорилле пĕлĕвне харпăр хăй тĕллĕн вĕреннипе ÿстерсе пыраççĕ. Халĕхи вăхăтра вĕсем И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине вĕренеççĕ.

Çак кунсенче кунта семинар пулса иртрĕ. Социализмăн экономикăлла тĕп законĕсем çинчен калаçу пулчĕ. Унта М. Иванова, Л. Матвеев, В. Терентьев юлташсем материала лайăх ăнланни палăрчĕ. Пурин те тĕплĕн çырса хатĕрленĕ конспектсем пур.

Аслă çулпуçăн гениллĕ ĕçне харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен активлăхне семинар татах ÿстерчĕ.

В. АНДРЕЕВ.

МТС-ри партилле-политикăлла ĕç

Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсемпе, уй-хир бригадирĕсемпе, механизаторсемпе тĕл пулса калаçнă чухне, вĕсем пурте уй-хир ĕçĕсене туса ирттерме кăçал колхозсене чылай çăмăлрах пулассине çинчен каласа кăтартаççĕ. Савăнмалăх пур: кăçалхи çураки тĕлне çĕршыври тĕрлĕ заводсенчен Шупашкар МТС-не чи çĕнĕ йышши дизель-моторлă 26 трактор тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли хатĕрсемпе оборудовани çителĕклĕ таран ярса панă. МТС районти 41 колхозра кăçал иртнĕ çулхипе танлаштарсан икĕ хута яхăн нумайрах ĕçлесе пама договорсем тунă.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви совет халăхĕн пурнăçĕпе культурине лайăхлатассишĕн ырми-канми тăрăшни çине ĕçпе ответлесе, районти колхозникĕсемпе механизаторсем кăçал тĕштырăсен тухăçлăхне районĕпе кашни гектар пуçне 16 центнертан ирттерме сăмах пачĕç. Çавăн пекех вĕсем техникăлла культурăсемпе тымарçимĕçсен, курăксен тухăçлăхне, обществăлла выльăх-чĕрлĕх шучĕпе унăн продукцийĕн тухăçлăхне нумай ÿстерме обязательство йышăннă.

Партин XIX-мĕш съезчĕ социализмлă ял хуçалăхĕ умне лартнă тĕп задачăна пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешÿре механизаторсен малти ретре пыраççĕ. Çавăнпа та ял хуçалăхĕнче малта пыракансен районти канашлăвĕнче трактористсемпе комбайнерсен [illegible] сăмахĕсене колхозниксем тулли кăмăлпа ырларĕç.

МТС-па колхозсем хушшинче тунă договорсене пурнăçламалла, тракторпа ÿвакан ĕçсен хăйне ларакан хакне йÿнетмелле, çунтармалли тата сĕрмелли япаласене перекетлемелле. Механизаторсен коллективĕ çав обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешĕве тухма хатĕр тăрать.

МТС-ра тракторсем юсанă тапхăрта мастерскоя е общежитие тăтăшах пырса çÿренĕ çынсем—райком работникĕсем пулчĕç. Районти ертсе пыракан работниксем МТС-ра тăтăшах пулма тăрăшаççĕ.

Пĕр кунхине парти райкомĕн секретарĕ бригадирсемпе вĕсен помощникĕсене, учетчиксене райкома пыма чĕнсе хăварнă.

— Хăварах пĕлетĕр, плансем пысăк, ĕçре йывăрлăхсемпе чăрмавсем пулĕç, — асăрхаттарнă вăл. — Плана пурнăçлакансем эсир пулатăр. Çавăнпа та пĕрле пуçтарăнса тĕплĕн сÿтсе явни пирĕншĕн те, сирĕншĕн те усăллă пулĕ.

МТС-ра унччен пурте харпăр хăй вырăнĕнче пулнă пек туйăннăччĕ. Кунти 13 бригадăра камсем бригадир, помощник, учетчик пулассине тата хăш тракторист мĕнле трактор çинче ĕçлессине МТС директорĕ П. Смирнов юлташ приказпах çирĕплетнĕччĕ. Анчах райком бюровĕн членĕсем, МТС-ри кадрсемпе тĕплĕнрех паллашас тесе, ку хутĕнче вăхăта хĕрхенмерĕç. Вĕсем кашни бригадирпа, унăн помощникĕпе, учетчикпа нумай вăхăт хушши калаçрĕç. Вĕсем ертсе пыма пултарнине, çĕнĕ техникăна мĕн таран вĕренсе алла илнине, малашнехи шухăш-ĕмĕчĕсене лайăхрах пĕлме тăрăшрĕç.

Ку ĕçе ирттерни райкома МТС дирекцийĕпе партбюро ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене уçса палăртма пулăшрĕ. Вĕсем кадрсене суйласа илнĕ тата ĕçе уйăрса лартнă чухне çынсен политика тĕлĕшĕнчи тата ĕçри пахалăхĕ çине пур чухне те кирлĕ пек пăхман.

7-мĕш бригадăн бригадирĕ Егоров юлташ производствăна лайăхлатассишĕн мар, хăйĕн интересĕшĕн ытларах тăрăшма тытăннă. Апла пулин те директор кăçал та Егоров юлташа бригадирта хăварма йышăннă. Райком бюровĕ дирекцие ку йăнăша тÿрлетме кăтарту панă. Бригадир пулма кама уйăрса лартмалла?

— Сайков комсомолеца!—сĕннĕ механизаторсем.

Сайков юлташ кăçалччен бригадир помощникĕ пулса ĕçленĕ. Трактористсем ăна хăйсене чи кăткăс вăхăтсенче те пулăшу пама ĕлкĕрнĕшĕн, хăй вĕренме тата ыттисене те вĕрентме тăрăшнăшăн юратаççĕ. Райком сĕннĕ хыççăн Сайков юлташа тата ун пекех ĕçре ÿсме тăрăшакан Бородовпа Харитонов юлташсене бригадирсем пулма çирĕплетнĕ.

Кадрсене суйласа илме тата ĕçе уйăрса лартма пулăшнă хыççăн, райком МТС-ри партбюро умне черетлĕ задача лартрĕ: механизаторсене политикăлла воспитани парас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла.

Трактор бригадисенче çураки тапхăрĕнче туса ирттермелли политикăлла-массăлла ĕçсен планне райком бюровĕнче сÿтсе явса çирĕплетнĕ. Ку план бригадăсенче социализмла ăмăртăва анлăн сарас, государство дисциплинине çирĕплетес, производство планне пур енĕпе те тултармалла тăвас тĕллеве пăхăнать. Райком МТС-ри партбюрона бригадăсенче политикăлла воспитани ĕçне туса пыма уйрăмах çамрăк бригадирсене пулăшма кăтарту панă. Халĕ çав бригадăсенче ĕçлеме опытлăрах агитаторсене уйăрнă.

Райком агитколлективна тĕрекленме, уйрăмах унăн ĕçри идейăлла шайне хăпартса пыма пулăшать. Агитаторсен семинарĕсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлти пусăмра ирттерессине пысăк вырăна хураççĕ. Кунта агитаторсене политикăлла-массăлла ĕçе бригадăсенче мĕнле формăсемпе тата меслетсемпе ирттермеллине вĕрентеççĕ. Райком секретарĕ М. Зайцев юлташ КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ çинчен икĕ семинарта доклад туса панă. Семинарсем ирттерес ĕçе райкомăн ытти ответлă работникĕсем те хутшăнаççĕ.

Планра партбюро членĕсем, агитаторсем хăçан, камсемпе, мĕнле темăсемпе калаçусем ирттерессине, политикăлла-массăлла ĕçе мĕнле туса пымаллине, социализмла ăмăрту мĕнле пыни çинчен пурне те пĕлтерсе тămаллине тĕплĕн шута илнĕ. Докладсемпе калаçусене КПСС обкомĕ панă тематика тăрăх ирттерме палăртнă. Бригадăсене хаçат-журналсем çитерсе тăма, çавăн пекех стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларма, вĕсенче критикăпа самокритикăна анлăн сарма палăртнă.

Вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕве анлăн пуçарса пыма МТС-ри парторганизацин вăйĕсем çителĕклĕ. Механизаторсен коллективĕнче 30 коммунист тата 41 комсомолец ĕçлеççĕ. Çав вăйсене тĕрĕс вырнаçтарса тухас тĕлĕшпе партбюро нумай ĕçленĕ, анчах организацилле ĕçĕн чи кирлĕ ыйтăвĕсенчен пĕрне манса хăварнă.

Коммунистсемпе комсомолецсен шучĕ хутшăннă май уйрăм бригадăсенче парти е комсомол групписем тума май пур. Çав группăсене организацилени, вĕсен вăйĕ çине таянса ĕçлени партбюрона механизаторсене коммунизмла воспитани парас ĕçе тата çÿлĕрех пусăма хăпартма пулăшнă пулĕччĕ. Анчах партбюро секретарĕ П. Козлов юлташ çав пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе халиччен те хака хуман пирки ун пек группăсем пĕр бригадăра та çук. Ку çитменлĕхе парти райкомĕ те асăрхаман.

Тракторпа тумалли ĕçсен планĕ чылай ÿснĕ май трактористсен малашне нумайрах вăй хума, çанталăк мĕнле тăнине пăхмасăр ĕçлеме тивет. Трактор бригадисем валли куçса çÿрекен вагонсем тăвасси çинчен МТС советĕнче тата ытти канашлусенче те ыйту тăратаççĕ. Анчах çак ыйту пысăк вырăн йышăнса тăнине тивĕçлипе хаклакансем сахал-ха. Пур енчен те лайăх тунă вагонра трактористсем ĕç хыççăн выртса канма çеç мар, вăхăта усăллă ирттерме тата вĕренме пултараççĕ.

Паллах ĕнтĕ, ун пек вагона трактор бригади е колхоз правленийĕ пĕр-пĕрин вăйĕсене пĕрлештермесĕр тума пултарас çук. Парти райкомĕ МТС дирекцийĕпе партбюрона çавăн пек вагонсем тăвас ĕçе хăвăртлатма кăтарту панă.

Трактористсен пурнăçпа йăла тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтересси çине тĕрĕс мар пăхакан колхоз руководителĕсем те пур-ха. Кун пек ыйтусене тĕрĕс татса пама механизаторсене райсовет исполкомĕн хăйĕн пулăшмалла.

Шупашкар МТС-ĕн коллективĕ кăçалхи çуракине пысăк вăйсемпе кĕтсе илет. Пуçламăш парторганизацин кĕрешÿри пултарулăхĕ те ÿсрĕ. Партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçе тĕпрен лайăхлатса, вăл механизаторсен коллективĕ умĕнче тăракан пысăк задачăсене пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешÿре çĕнĕ ÿсĕм тăвĕ.

Н. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Елчĕк районĕнчи «Колхоз ялавĕ» хаçат çинчен çырнă çырăва «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ КПСС райкомне ярса панăччĕ.

КПСС Елчĕк райкомĕ районти хаçатра кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕнче пичетленнĕ «МТС пулăшăвĕ» ятлă статьяра МТС колхозсене пулăшни çинчен цифрăсене ÿстерсе кăтартнине, кун пирки корреспондент тĕрĕс çырнине палăртнă. Райком районти хаçат редакторне малашне ун пек тума юраманни çинчен астутарнă.

* * *

Ĕçсынни депутачĕсен Красноармейски район Совет исполкомĕн ял хуçалăх пайĕ Жданов ячĕпе тăракан колхоз фермисем çинчен çырнă заметкăра фактсене тĕрĕс кăтартса пани çинчен пĕлтерчĕ.

Заметкăра асăннисене вырăна кайса тĕрĕсленĕ, çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăннă. Сысна фермине çĕнĕ кормокухня тунă, кăмака тутарса 4 хуран лартса панă тата фермăра ĕçлеме пĕр çын хушса панă. Ĕне фермине те кормокухня туса, 3 хуран лартнă. Ĕнесене зоотехника вĕрентнĕ пек тăрантарса усрама тытăннă.

Хамăр республикăра

☆

Хĕрлĕ ялав илме тивĕçлĕ пулчĕ

ÇĔРПӲ. Елаш ял Совечĕ халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана кашни кварталтах ăнăçлă тултарса, районта мала тухать.

Ял Советĕнчи активистсем, ял Совет депутачĕсем тата интеллигенци халăх хушшинче политикăлла ăнлантару ĕçне тăтăшах туса пыраççĕ, халăх укçа-тенки коммунизмăн аслă стройкисене тума, халăх культурине лайăхлатма кайни çинчен каласа параççĕ.

Ял Совечĕ (председателĕ Бардасов юлташ) укçа-тенкĕ пухассине лайăх организациленĕ. Ку ыйтăва яланах сессисенче, ял Совет исполкомĕн ларăвĕсенче сӳтсе явассĕ тата кашни активиста порученисем параççĕ. Çав порученисене кам мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеççĕ. Çапла ĕçленипе ял Совечĕ пĕлтĕрхи тăваттăмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухассипе мала тухрĕ, район Совечĕпе КПСС райкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илчĕ.

Елаш ял Совечĕ, Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, кăçалхи пĕрремĕш кварталти финанс планне 118 процент тултарчĕ,—район Совечĕпе КПСС райкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинче хăварчĕ, лайăх ĕçленĕшĕн 1.000 тенкĕ премии илчĕ.

Халĕ ял Советĕнчи активистсем иккĕмĕш кварталти финанс планне ăнăçлă пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

С. ШАДИН.

А. Н. ОСТРОВСКИЙ ÇУРАЛНĂРАНПА 130 ÇУЛ ÇИТНИНЕ ПАЛЛĂ ТУРĔÇ

Чăваш государство педагогика институтĕнчи студентсемпе преподавательсем вырăссен аслă драматургĕ А. Н. Островский çуралнăранпа 130 çул тултарнине ăнлăн паллă турĕç.

Драматург творчестви çинчен преподавательсем студентсемпе калаçу ирттерчĕç. Кабинетсемпе вуламалли залра А. Н. Островский кĕнекисен витринине тунă.

Академи театрĕнче А. Н. Островский çуралнăранпа 130 çул çитнине паллă туса литература вечерĕ пулчĕ. Унта А. Н. Островский пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен доклад туса пачĕç.

Юлашкинчен «Невольницы» пьесăна кăтартрĕç.

Н. ГРИГОРЬЕВ.

А. Н. ОСТРОВСКИЙ ПЬЕСИСЕНЕ ЛАРТАÇÇĔ

ОКТЯБРЬСКИ. «Волгарь» колхозри драма коллективĕ—районти лайăх ĕçлекен коллективсенчен пĕри. Вăл юлашки вăхăтра кăна çирĕме яхăн спектакль лартса панă. Ку шутра вырăссен чаплă драматургĕ А. Н. Островский çырнă классикăлла произведенисем те пур. Çак кунсенче «Шухă вырăнта» пьесăна лартса пачĕç.

Драмкружок çавăн пекех К. Финн çырнă «Царне», Л. Агаковпа Л. Родионовăн «Ылтăн вăчăра», Н. Терентьевăн «Сирень аллеи» пьесăсене пысăк ăсталăхпа лартса пачĕ. Çак пьесăсене кӳршĕри колхозсенче те кăтартнă.

Халĕ драмкружок районти культура çуртĕнче А. Н. Островскин «Шухă вырăнта» пьесине лартса пама хатĕрленет.

П. ЕНЦОВ.

ВУЛАКАНСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔСЕМ

ЧКАЛОВСКИ. Патăръелĕнчи педучилищĕре çак кунсенче вулакансен конференцийĕсем пулса иртрĕç.

Виççĕмĕш курсра вĕренекенсем Сталинла премии лауреачĕн В. Лацисăн «К новому берегу» романĕ тăрăх конференци ирттерчĕç.

Çитес вăхăтра К. Турханăн «Йăмраллă ял», Г. Башировăн «Честь» романĕсем тăрăх конференцисем ирттереççĕ.

И. МАТРОСОВ.

КАНАШ СТАНЦИНЧЕ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: диспетчер В. А. Андреев юлташ ĕçре.
К. ТАХТЕЕВ фотоӳкерчĕкĕ.

Стахановла смена

КАНАШ. Чугун çул станцийĕнче кунĕн-çĕрĕн хĕрӳллĕ ĕç вĕресе тăрать. Коммунизмăн аслă стройкисем валли, пысăк хуласемпе поселоксем валли йывăç, металл тата ытти материалсем тиенĕ поездсем вĕçĕ-хĕррисĕр иртсе каяççĕ. Ялхуçалăхĕ валли тракторсем, тĕрлĕ машинăсем, удобренисем, ĕççыннисем валли апатçимĕçпе промышленность таварĕсем турттарасси пĕрмаях ӳссе пырать. Поездсене хăвăрт йышăнса ăнăçлă ăсатасси станци коллективĕсенчен нумай килет.

Станцире пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăвассишĕн сменăсем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă. Ăмăртура В. Андреев диспетчер ертсе пыракан смена уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартать. Май уявĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, смена коллективĕ çĕнĕ обязательство илнĕ. Станцире куллен вагонсем нумай лараççĕ, çавăн пирки килекен поездсене йышăнма час-часах çул çитмест. Андреев юлташ ертсе пыракан смена станцири çулсене вагонсенчен тасатас тĕллев лартнă.

Станцине Хусан, Мускав, Улатăр тата Шупашкар еннелле каякан вагонсем килсе тăраççĕ. Вĕсене хăвăрт ăсатасси кашни работник—стрелочникран пуçласа диспетчер таранах пуçаруллă ĕçленинчен килет. Куртлюковпа Евсеев составительсем пĕр çул юппи çине пĕчĕкрех икшер состав вырнаçтарса лартма тытăннă. Стрелочниксем, сцепщиксем тата ытти работниксем пурте тăрăшса ĕçлеме, пĕрне-пĕри пулăшса тăма пуçланă. Кĕске вăхăт хушшинче смена темиçе поезд-и вагонсене кирлĕ çĕре ăсатнă, çапла вара çĕнĕ поездсене çийĕнчех йышăнма майсем тунă. Кунсăр пуçне смена вырăнти грузсене леççе парас ĕçе те хăвăртлатнă. Çавăн хыççăн смена грузсем 25—30 процент ытларах тиесе пушатма пуçланă.

Андреев юлташ ытти сменăсенче ĕçлекен диспетчерсемпе тачă çыхăну тытать, вĕсен опычĕпе паллашать, хăйĕн шухăш-туйăмĕсем çинчен каласа парать. Вăл ертсе пыракан смена примерĕпе ытти сменăсем те поездсене чăрăнмасăр йышăнма тытăннă. Филиппов диспетчер ертсе пыракан смена задание тăтăшах ирттерсе тултарать. Март уйăхĕнче станци грузсем тиемелли плана 120 процент тултарнă.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, станци коллективĕ пысăкрах çĕнĕ обязательство илнĕ. Вăл поездсене хăвăрт йышăнса ăсатма, вагонсем ахаль ларнине чакарма сăмах панă. Сменăсем хушшинчи ăмăртура В. Андреев юлташ ертсе пыракан смена куллен паха тĕслĕхсем кăтартать. Станцири партипе профсоюз организацийĕсем стахановла сменăн опычĕпе ытти сменăсене паллаштараççĕ, унтан пример илме вĕрентеççĕ.

М. УТКИН.

Артельти хор

СĔНТĔРВĂРРИ. 1937 çулта Ăстакассинчи «Лесоруб» артель çумĕнче хор организациленĕ. Хор кружокне 40 çын çырăннă. Кружока А. Петров юлташ ертсе пыма пуçланă. Хор вырăс тата чăваш юррисене 100 юрă ытла юрлама вĕреннĕ. Хор Шупашкарта иртнĕ смотрсенче икĕ хутчен пулнă тата çывăхри районсемпе республикăсенче пулса нумай концертсем панă.

Республикăри Халăх творчествин çуртĕ хор коллективне виçĕ хутчен грамотăсем парса наградăланă, 3.000 тенкĕ тăракан баян парса парнеленĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче хор коллективĕ вăхăтлăха хăйĕн ĕçне туса пырайман. 1952 çулта хора тепĕр хут организацилерĕç. Хористсем 30 çын шутланаççĕ. А. Петров юлташ ертсе пыракан хор Семеновскăра (Мари АССР), Сĕнтĕрвăрринче, Турханкассинче пулса пысăк концертсем панă. Çак кунсенче пулса иртнĕ районти смотрта хор хăйĕн пысăк ăсталăхне кăтартрĕ.

П. ГЕРАСИМОВ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Районти чылай шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăнчĕç. Шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес тĕлĕшпе Йĕпреç поселок Совечĕ (председателĕ Н. Горбунов) çултан-çул тăрăшса ĕçлет.

Поселок Совечĕ Йĕпреçри вăтам шкул, Йĕпреçри тата Чернореченскинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсем валли вăхăтра укçа-тенкĕ уйăрса парать. Çак кунсенче поселок Совечĕ çитес вĕренӳ çулĕ валли шкулсене кирлĕ чухлĕ вутă илсе пачĕ. Чернореченск автоçулĕ çинче ĕçлекен шоферсем Чернореченск поселокĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул валли 100 кубометр вутă турттарса хучĕç.

Шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес тĕлĕшпе Кирово ял Совечĕ те (председателĕ А. Этричев) тăрăшса ĕçлет.

Г. РУСАНОВ.

☆

Библиотека пулăшăвĕ

Республикăра библиотекăсемпе вулав çурчĕсен шучĕ çулсерен ӳссе пырать. Иртнĕ çулта ялсенче çĕнĕрен 85 библиотека уçнă. Вулакансен йышĕ те ӳссе пырать. Вулакансене кирлĕ кĕнекесем тупса парасси библиотекăсен задачи пулса тăрать. Ялти библиотекăсенче çук кĕнекесене тупса парас ĕçре республикăри библиотека пысăк вырăн йышăнать.

Шупашкарти М. Горький ячĕпе тăракан библиотека республикăри библиотекăсемпе çирĕп çыхăну тытать. Вĕсене кулленхи ĕçре методикăллă пулăшу панипе пĕрлех, кирлĕ кĕнекесем ярса пысăк пулăшу парать.

Иртнĕ çулта районти библиотекăсем М. Горький ячĕпе тăракан библиотека урлă 1.512 кĕнеке çырăнса илнĕ, нумай вулакансен ыйтăвĕсене тивĕçтернĕ. Кăçалхи 3 уйăх хушшинче 22 районти библиотекăсем тата 24 ялти библиотекăсем хăйсен вулаканĕсем валли 500 кĕнеке ытла ыйтса илнĕ. Етĕрне, Вăрнар, Улатăр, Вăрмар тата ытти районсенчи библиотекăсем М. Горький ячĕпе тăракан библиотекăран кĕнекесем нумай çырăнса илеççĕ.

Ишлей районĕнчи Тăрăн ялĕнчи библиотека (заведующийĕ Яковлева юлташ), Çĕрпӳ районĕнчи Çĕньялти библиотека (заведующийĕ Григорьева юлташ), Шупашкарти М. Горький ячĕпе тăракан библиотекăран кирлĕ кĕнекесене йышлăн илсе тăраççĕ.

Вулакансем хăйсене кирлĕ кĕнекесене вырăнти библиотекăсем урлă çеç мар, пысăк библиотекăсенчен тӳрех çырăнса илме пултараççĕ. Шупашкарти М. Горький ячĕпе тăракан библиотекăран заочнăй абонемент йĕркипе кăçалхи 3 уйăх хушшинче 72 çын 454 кĕнеке ыйтса илнĕ. Кĕнеке çырăнса илекенсем хушшинче—учительсем, врачсем, ялхуçалăх ĕçченĕсем, агрономсем, партипе совет работникĕсем.

Ивановăри кирпĕч завочĕн экономисчĕ В. Гаврилов юлташ кăçал Шупашкарти библиотекăран 10 кĕнеке çырăнса илнĕ. Педагогика институчĕн заочникĕ С. Чистяков юлташ Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьел ялĕнчи вулав çурчĕн заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăл Шупашкарти библиотекăрая кĕнекесем нумай çырăнса илет.

Заочнăй абонемент йĕркипе кĕнекесем çырăнса илекенсен йышĕ çулсерен ӳссе пырать.

Вулакансен ыйтăвĕсене тивĕçтерес шутпа М. Горький ячĕпе тăракан библиотека çĕршыври ытти пысăк библиотекăсемпе çыхăну тытать. Кăçал Мускаври, Ленинградри, Горькири тата ытти библиотекăсенчен нумай кĕнеке çырăнса илнĕ.

Н. ИЛЬИН.

Хастарлă сунарçăсем

УЛАТĂР. В. Бурмистров, К. Дроздов, А. Будров сунарçăсене районта пĕлмен çын çук. Вĕсем чылай çул хушши сунара çӳресе, хатĕрлев организацийĕсене тискер кайăксен тирĕсене нумай панă.

В. Бурмистровпа А. Будров сунара çӳреме пуçланăранпа 20 çул ытла иртнĕ. А. Будров 74 çула çитнĕ пулин те сунара çӳреме пăрахмасть. Вăл çулсерен 2—3 кашкăр тата ытти нумай тискер кайăксем тытать.

К. Дроздов—çамрăк сунарçă. Вăл кăçал хĕллехи сезонра 2 кашкăр, 13 сăсар, 7 тилĕ, 7 пакша, 21 мулкач тата ытти тискер кайăксем те нумай тытнă. Тискер кайăксен тирĕсене памалли плана 429 процент тултарнă. Çамрăк сунарçăна 2.363 тенкĕ укçа панă.

Г. МАЛЬЦЕВ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Фредерик Жолио-Кюри пĕлтерни

ПРАГА, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн секретариачĕ хаçатсенче пичетлеме Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Фредерик Жолио-Кюри пĕлтернине панă. Пĕлтерӳре çапла каланă:

Халăхсен мире хӳтĕлес тĕлĕшпе пухăннă Конгресĕ пилĕк аслă державăна чĕнсе каланинчен тухса тăракан решенисене пурнăçа кĕртме уйăрнă комисси çав правительствăсем патне мартăн 29-мĕшĕнче çыру янă.

Комисси правительствăсене Мир Пакчĕ тăвасси çинчен калаçусем ирттерме тытăнма чĕннĕ. Вăл çавăн пекех тата ытти çĕршывсен правительствисемпе общественноçа та çак ĕçре комиссие пулăшма чĕннĕ.

Аслă державăсем хушшинче калаçу пуçласа ямалла тăвассишĕн тĕнчере пур çĕрте те халăх шухăш-кăмăлĕ вăйланса пырать.

Мире хӳтĕлессишĕн сарăлса пыракан юхăм енчен, уйрăмах. наци комитечĕсемпе мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур комитетсем енчен халăхсен Конгресĕн комиссийĕ аслă державăсен правительствисем патне ярса панă çырăва кашни çĕршывра хăйсен правительствисене йышăнтармалла тăвассишĕн пысăк кампани пуçласа яни кирлĕ.

Тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма пулăшас тĕлĕшпе çĕнĕ ĕçсене пурнăçлама пултаракан мĕнпур вăйсене пĕрлештерес тесе, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Бюровĕ 1953 çулхи майăн 5-мĕшĕпе 6-мĕшĕнче лару ирттерет. Бюро çавăн пекех тата Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн çитес сессине пухмалли куна палăртать.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Политикăлла комитетра

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Политикăлла комитетăн ĕнерхи ирхи ларăвĕнче Польша делегацийĕ çĕнĕ тĕнче вăрçи хăрушлăхне сирсе ярас тата халăхсем хушшинче мирпе туслăха çирĕплетес ыйту тăрăх тăратнă сĕнӳсене малалла сӳтсе явнă. Ларура Бразили, Мексика, Ливан, Индонези, Франци представителĕсем тухса каланă.

Бразили делегацийĕ Корея ыйтăвĕ тăрăх тăратнă резолюци проекчĕ çинчен каланă чухне Бразили представителĕ çакна палăртнă: Китай Халăх Республикин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен пĕлтерни, çавăн пекех тата çак ыйту тăрăх калаçусем ăнăçлă пыни ĕç ăнăçлă пулассе пĕлтерет тата пĕтĕм Корея ыйтăвне хăвăртрах татса памалли никĕс пулса тăрать. Корейăра мир туса хуни, тенĕ вăл, тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярас тĕлĕшпе тунă пысăк утăм пулать. Бразили представителĕ Политикăлла комитета Бразили делегацийĕ тăратнă резолюци проектне ырлама чĕннĕ. Çав проектра «Паньмыньчжоньра калаçусем малалла пыни çитес çывăх вăхăтрах Корейăра перемири тума май парассине» шанса тăни çинчен каланă тата Хăрушсăрлăх Совечĕ Корейăра перемири пирки килĕшӳ туни çинчен пĕлтернĕ хыпара илсенех, Корея ыйтăвне малалла пăхса тухас тĕлĕшпе Генеральнăй Ассамблея председательне çак сессие тепĕр хут пухма сĕннĕ. Çак сессие çавăн пекех тата Корейăри ытти ĕçсем пирки те ООН членĕсен ыгларахăшĕ Корея ыйтăвне пăхса тухмалла тесе шутлать пулсан та пухмалла.

Мексика представителĕ делегатсене пĕрпĕрне шанса ĕçлемелли лару-тăру туса хума чĕннĕ, çав вăхăтрах Польша сĕнĕвĕсене йышăнассине хирĕç тăнă. Паньмыньчжоньра калаçусем ирттерекен енĕсем мĕнпур тавлашуллă ыйтусем тăрăх калаçса татăличчен, Мексика делегацийĕ шучĕпе, Корейăра вăрçă ĕçĕсене халех чарса лартасси çинчен тăратнă сĕнĕве йышăнма май çук.

Ливан представителĕ хăйĕн сăмахĕнче пуринчен ытла Израиль правительствин тулашри политикине критикленĕ.

Индонези представителĕ хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртнă: Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республики тыткăнри çар сыннисене улăштарса илесси çинчен панă сĕнӳ Корейăра мир тăвас ĕçри юлашки чăрмава пĕтерсе лартать, мĕншĕн тесен çак сĕнӳ Корейăра вăрçа чарса лартмалли çирĕп никĕс пулса тăрать. Корея ыйтăвне сӳтсе явассинчен пăрăнса каймалла мар, Генеральнăй Ассамблейăн Корейăри вăрçа чарса лартасси çинчен решени йышăнмалла, тесе каланă вăл.

Лару хупăнас умĕн Франци представителĕ тухса каланă. Вăл: Франци делегацийĕ Генеральнăй Ассамблейăна çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма пулăшĕ, тенĕ. Анчах çав вăхăтрах вăл Польша сĕнĕвĕсене пĕрне те, вăл шутра—Корейăри вăрçă ĕçĕсене халех чарса лартасси çинчен тата Корея ыйтăвне пĕтĕмĕшпе мирлĕн татса парасси çинчен тăратнă сĕнĕве те йышăнман.

Франци делегачĕ çапла каланă: Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республики тыткăнри çар сыннисене улăштарса илесси çинчен панă сĕнӳ Корейăра перемири тăвас тĕлĕшпе тăракан юлашки чăрмава сирсе ярать. Корейăри вăрçă ĕçĕсене чарса лартни тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма пулăшать. Паньмыньчжоньра калаçусем пынă вăхăтра вăрçă вăрçакан икĕ енĕн те Корейăра юн юхтарассине вăйлатма пултаракан нимĕнле «вырăнсăр утăм» та тумалла мар, тенĕ вăл.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС): Апрелĕн 15-мĕшĕнчи кăнтăрлахи ларура Политикăлла комитет Польша сĕнĕвĕсене малалла сӳтсе явнă.

Лару пуçламăшĕнче Сири тата Венесуэла делегачĕсем тухса каланă.

Сири представителĕ Польша делегацийĕ тăратнă резолюци проектне сасăланă чухне сасăлама тытăнса тăрасси çинчен пĕлтернĕ. Анчах ку вăл, тенĕ вăл, пĕре те Сири делегацийĕ çак проектра кăларса тăратнă принципсене йышăнмасть тенине пĕлтермест. Польша сĕнĕвĕсене Генеральнăй Ассамблейăра сӳтсе явни мир ĕçĕшĕн пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах Польша делегацийĕн резолюци проектĕнче çырса хунă тĕллевсене пурнăçлама аслă державăсем хушшинче калаçусем ирттерсен, тен, лайăхрах пулĕ.

Сири делегачĕ тата çакна палăртнă: араб çĕршывĕсем тĕрлĕ режимлă çĕршывсем пĕр-пĕрине мирлĕн килĕштерсе пурăнасси çинчен калакан принципа йышăнаççĕ, араб государствисем Совет Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе те, Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсемпе те йĕркеллĕ çыхăнусем тытма хатĕр.

Юлашкинчен Сири представителĕ Корея ыйтăвĕ тăрăх Бразили делегацийĕ тăратнă резолюци проектне ырланă.

Совет делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский Польша делегацийĕн сĕнĕвĕсем майлă пулса каланă. А. Я. Вышинский Польша сĕнĕвĕсене Политикăлла комитетра сӳтсе явас ĕç мĕнле пынине пăхса тухнă. Вăл Польша делегацийĕ тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярас тата халăхсем хушшинче мирпе туслăха тĕреклетес ыйту тăрăх тăратнă сĕнӳсем пирки чылай делегатсем вырăнсăр тухса каланине палăртнă.

«Бразили делегацийĕ Корея ыйтăвĕ тăрăх тăратнă резолюци проектне илес пулсан,—тенĕ юлашкинчен А. Я. Вышинский,—унпа малтанлăха паллашнă тăрăх, пире çак проект тимлĕн пăхса тухма юрăхлă пек туйăнать.

Çак проектпа тĕплĕн паллашнă хыççăн совет делегацийĕ çакăн пирки тепĕр хут тухса калама шутлать».

Лару хупăнас умĕн США представителĕ Гросс кĕске сăмах тухса каланă. Вăл, хăйĕн малтанхи сăмахĕнчи пекех, хĕçпăшаллă вăйсемпе хĕçпăшалсене чакарас тĕлĕшпе Америка позицине ырланă, Çурçĕр-Атлантика пактне ООН Уставĕн принципĕсене пурнăçлама тунă пек кăтартса пама пăхнă. Америка делегачĕ Корея ыйтăвĕ тăрăх Бразили делегацийĕ тăратнă резолюци проектне ырлани çинчен каланă.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио пĕлтернĕ тăрăх, ООН Генеральнăй Ассамблейин Политикăлла комитечĕ паян Бразили делегацийĕ тăратнă резолюци проектне йышăннă. Резолюцие йышăнассишĕн пуртĕ—60 çĕршыв сасăланă.

АГРОНОМ КАНАШĔ

Гексахлоранпа ытларах усă курар

Çĕнĕ пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче тырпул тухăçлăхне, çĕр-ĕçĕнчен илекен таварлă продукцие малалла ӳстерсе пыма пăхнă. Паллă ĕнтĕ, çак валачăна пурнăçа кĕртме агротехникăна тĕрĕс пурнăçлани кирлĕ. Агротехникăлла пĕр ĕçе туса тепĕрне манса кăварма юрамасть. Анчах ун пекки пирĕн час-часах пулкалать-ха.

Тырпулсен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре вĕсене сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешни пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та ăна пĕр колхозра те манăçа кăварма юрамасть.

Пирĕн условисенче акса-лартса тăвакан ӳсентăрана пуринчен ытларах хытă хуртсем (проволочники) тата тырă шăни (шведская муха) нумай сиен кӳме пултараççĕ. Хăшпĕр çулсенче вĕсем кӳрекен сиен 10—15 процентран та иртет. Сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсене пĕтерме халĕ пур майсем те çителĕклĕ, анчах уйрăм колхозсем ӳсентăрана кирлĕ пек сыхласа усрамаççĕ.

Ӳсентăран шăтнă вăхăтра ытларах пĕтсе сайралана пултарать. Çавăнпа та ӳсентăрана сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсенчен сыхласси çине тимлĕрĕн пăхни пĕрре те пулмалла мар.

Хытă хуртсемпе тата ытти хурт-кăпшанкăсемпе кĕрешме юлашки вăхăтра гексахлоранпа, тĕрĕсрех, унăн препарачĕпе — дустпа усă кураççĕ. Вăл—вăйлă наркăмăш.

Гексахлоран пысăк усă панине пирĕн республикăра туса ирттернĕ опытсем те лайăх çирĕплетсе параççĕ. Çĕрпӳри селекци станцинче 1950 çулта гексахлоранпа усă курнă участокра, унпа усă курман участокпа танлаштарсан, кашни гектар пуçне 10 центнер ытларах çурхи тулă пухса кĕртнĕ. Тата тепĕр тĕслĕх. Улатăр районĕнчи вăрлăх хуçалăхĕнче—«Победа Октября» колхозра кашни гектар çине 12 процентлă гексахлоран дусчĕ 50 килограмм сапнă, сапман участокпа танлаштарсан, гектар пуçне 2 центнер ытларах çурхи тулă туса илнĕ.

Гексахлорана тӳрех тăпра çине сапса туса ирттернĕ опытсене чылай илсе кăтартма пулать. Кун пек чухне ăна акас умĕн культиваци тунă вăхăтра сапаççĕ, вăл вара вăрлăх акăнакан тарăнăша вырнаççа юлать. Анчах ăна сапсан çийĕнчех культиваци тумалла, унсăрăн хĕвел çутти гексахлоранăн хăватне чакарать. Участокра хытă хуртсем нумай ĕрчене пулсан, çак меслетпе усă курмалла.

Гексахлоранпа урăх майпа та усă кураççĕ. Ăна, инструкцире кăтартса панă пек, акас умĕн вăрлăхпа хутăштараççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» ялхуçалăх артелĕнче вăрлăха çавăн пек хатĕрлесе акнипе тырă шăнисене виçĕ хут чакарнă, ытти участоксемпе танлаштарсан, кашни гектар пуçне 2,4 центнер ытларах çурхи тулă тухнă.

Канаш районĕнчи «Красное пламя» колхозра çурхи тулă акнă участок 1952 çулта 18 процент таран тырă шăнипе сиенленнĕ пулнă. Çав вăхăтрах вăрлăха гексахлоранпа хутăштарса акнă участок 2,3 процент кăна сиен курнă, унта тулă ытти вырăнтипе танлаштарсан, гектар пуçне 4,38 центнер ытларах тухнă.

Иртнĕ çулта вăрлăха гексахлоранпа хутăштарса акас ĕçе нумай колхозсенче туса ирттернĕ. Опытсем ку меслет пысăк усă кӳнине кăтартса панă. Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра вăрлăха гексахлоранпа хутăштарса акса, ахаль участокрипе танлаштарсан, 8 центнер ытларах çурхи тулă туса илнĕ. Сĕнтĕр МТС-ĕн участокри агрономĕ А. Гурьева юлташ Мичурин ячĕпе тăракан артельте туса ирттернĕ опыт та çавăн çинченех калать. Тĕрĕслесе пăхма уйăрса хăварнă участоксенчипе танлаштарсан, вăрлăха гексахлоранпа хутăштарса акнă çĕрте кашни гектартан 6 центнер ытла урпа, 7 центнер ытла пăрçа пухса кĕртнĕ.

Лайăх тĕслĕхсем татах та нумай илсе кăтартма пулать. Вĕсем пурте гексахлоран сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсене пĕтермелли вăйлă препарат пулнине, тырпул тухăçлăхне ӳстерме пулăшнине çирĕплетсе параççĕ. Çакă вăл гексахлоран тырпул калчине хытă хуртран лайăх сыхланинчен килет. Нормăран ытлашши сапмасан, гексахлоран тăпра тухăçлăхне пĕрре те пăсмасть.

Гексахлоран хытă хурта кăна мар, тырă лĕпĕшне те пĕтерме пулăшать. Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхозăн кăярах акнă урпа участокĕ тырă лĕпĕшĕпе 52 процент таран сиенленнĕ пулнă, гексахлоранпа хутăштарса акнă участокра вара икĕ хут ытла сахалтарах сиенленнине палăртнă. Çав участокра кашни гектартан 25 центнер урпа пухса кĕртнĕ, хутăштармасăр акнă çĕрте 12,7-шер центнер çеç тухнă.

Вăрлăха акас умĕн гексахлоранпа хутăштарни пысăк усă панине шута илсе, малашне ăна пур колхозсенче те пурнăçлама тытăнмалла. Ăна агротехникăн питĕ кирлĕ пайĕ тесе шутлас пулать. Унăн техники йывăр мар, кашни колхозрах вăл ĕçе çăмăллăнах туса ирттерме май пур. Вăрлăха гексахлоранпа «идеал» е ытти машинăсемпе хутăштараççĕ, вĕсем çук пулсан, юри майлаштарса тунă пичкесенче те хутăштарма юрать.

Гексахлорана вăрлăхпа вутпуççинчен тасатнă хыççăн хутăштараççĕ. Яровизациленĕ тата вутпуççинчен тасатнă вăрлăха малтан типĕтмелле, унтан тин гексахлоранпа хутăштармалла. Тулă, ыраш, пăрça вăрлăхĕсемпе хутăштарма центнер пуçне гексахлоранăн 12 процентлă дустне пĕр килограмм, урпа, сĕлĕ валли—2 килограмм, 10 килограмм хĕрлĕ кăшман вăррипе хутăштарма—пĕр килограмм, пĕр килограмм турнепс валли çур килограмм дуст илеççĕ. Органически япаласемпе пуян тата нӳрĕ нумай тытăнса тăракан тăпра çине сапнă чухне препаратăн нормине центнер пуçне — хупăсăр тырăсем валли 1,5 килограмм, хупăллă тырăсем валли—2,5—3 килограмм таран ӳстерме юрать. Калас пулать, препаратăн нормине чакарма юрамасть, ун пек тусан, вăл усă параймасть. Гексахлоранăн дусчĕпе усă курнă чухнĕ ытти наркăмăшсем тĕлĕшпе кăтартса панисене асра тытса ĕçлемелле.

Кăçал колхозсенче гексахлоранпа анлăн усă курма палăртнă. Ялхуçалăх специалисчĕсемпе колхоз руководителĕсен тивĕçĕ çав кирлĕ ĕçе йĕркеллĕ туса ирттересси пулать.

Г. ШУВАЛОВ,

Ӳсентăрана сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Ленинградри институт аспиранчĕ.

Иранри ĕçсем

ТЕГЕРАН, апрелĕн 16-мĕшĕ (ТАСС). Паян Иран меджлисĕн ларăвĕ пухăнмалла пулнă. Ларура, правительство ыйтнипе, «сакăр çынтан тунă комисси» докладне пăхса тухмалла. Комисси сĕннĕ тăрăх, çĕршыври пĕтĕм граждански влаçпа çар влаçĕ министрсен совечĕн аллине куçмалла.

Анчах та Мосаддык правительствине хирĕç пыракан оппозици депутачĕсем (пурĕ сакăр çын) лару пулмалли кун Тегеранран юри тухса кайнă. Меджлис ларăвĕ, кворум çитмен пирки, пулман.

«Нируе севвом» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер политикăлла организацисем чылайăшĕ хăйсем майлă тăракансене меджлис çурчĕ умĕнче, Мосаддык правительствине хӳтĕлесе, сакăр çынтан тунă комисси докладне çирĕплетме ыйтса, паян демонстраци ирттерме чĕннĕ.

Паян ирхине пур çĕрте те ĕçе чарса лартмалли çинчен пĕлтернĕ. Тегеран пасарĕ тата хулари мĕнпур магазинсем хупă тăраççĕ. Урамсенче халăх нумай.

Меджлис çурчĕ умĕнчи площадĕ хулан тĕрлĕ пайĕсенчен демонстрантсен колоннисем пыма пуçланă. Демонстрантсем «сакăр çынтан тунă комисси» докладне хӳтĕлеме чĕннĕ.

Урамсенче полицейскисемпе салтаксене йышлăн вырнаçтарса тăратнă. Мосаддык çурчĕ патне тата шах дворецĕ патне пыракан урамсене танксемпе броневиксем пӳлсе тăраççĕ.

Хулари пысăк урамсенче пуринче те демонстрантсен колоннисем пулнă. Меджлис çурчĕ умĕнчен вуншар пин çын иртсе пынă.

ПАРИЖ, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин Тегеранри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян Тегеранра демонстраци пулнă вăхăтра полицейскисем пĕр çынна йывăр, тăватă çынна çăмăл амантнă. 12 демонстранта арестленĕ.

Тĕнчери лару–тăру

ВАШИНГТОНРА АДЕНАУЭРПА КАЛАÇНИ

Вашингтонра США правительствипе Бонн канцлерĕ Аденауэр хушшинче пулса иртнĕ калаçусем çинчен пĕлтерине сичĕтлесе каларĕç.

Ют çĕршывсенчи хаçатсем çырнă тăрăх, Аденауэр Вашингтонра пулнипе Хĕвеланăç Европăри чылай çĕршывсен министрĕсем пĕрин хыççăн тепри Вашингтона пырса кайни вĕçленнĕ. Анчах Вашингтонра Бонн реваншисчĕсен пуçлăхне пуринчен те ăшшăнрах кĕтсе илнĕ. США-ри империалистсен хаçачĕсем Аденауэр США государство деятелĕсене кăмăла кайни çинчен мухтаса çыраççĕ. Хаçатсем Бонн канцлерне «партнер-фаворит», «Европа шкулĕнчи чи лайăх ученик», тесе илĕртсе ят панă.

Аденауэр вара, хăй черечĕпе, Вашингтонра тата США-ри ытти хуласенче тухса каланă сăмахсенче Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушнисене Бонн пурне те туса пыма хатĕр тăни çинчен тупа тунă, Хĕвеланăç Германи халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç тăракан «чи çирĕп тĕрек пулса тăрать», тесе ĕнентерме тăрăшнă. Вăл Германие çĕнĕрен хĕçпăшаллантарассишĕн, «Хĕвеланăç Европа пĕрлешĕвĕ» текен пĕркенчĕкпе витĕнсе Хĕвеланăç Европăри государствăсен агрессиллĕ блокне хăвăртрах туса хурассишĕн хыпăнса çунать. Урăхла каласан, Аденауэр «мир ĕçне хирĕç саботаж» тунă. Вăл «мир ĕçне хирĕç саботаж» тунине, сăмахран, Германи рейхканцлерĕ пулнă паллă обществăлла деятель доктор Вирт АДН агентствин корреспонденчĕпе калаçнă чухне палăртнă.

Паллах ĕнтĕ, Аденауэрпа Америка правительствин представителĕсем хушшинче пынă калаçусен тĕллевĕ мир ĕçне хавшатасси пулнă.

Пĕлтерӳре уйрăмах «Европа пĕрлешĕвĕ» тенĕскерне туса хурасси çинчен Парижра çырса хатĕрленĕ çар договорне «хăвăртрах çирĕплетме» кирлине палăртнă. Аденауэр хăй енчен Хĕвеланăç Германи çак блока кĕрекен ытти мĕнпур çĕршывсемпе «килĕштерсе ĕçлеме хатĕр пулни тата ĕçлесшĕн пулни» çинчен шантарса каланă. США хăй енчен «нимĕç çарĕсене хĕçпăшаллантарас тĕллевпе Европăри оборона пĕрлешĕвне çар материалĕсем тăратма» пулнă.

Ют çĕршывсенчи хаçатсем çырнă тăрăх, США Францие Бонн тата Париж договорĕсене çирĕплетме хĕтĕртет. Францири пуç пулса тăракан ушкăнсем, асăннă договорсене çирĕплетме май килмесен, нимĕç çарне туса хурасси урăх майпа пулма пултарасран хăраççĕ. Ĕç кун пек килсе тухас пулсан, Франци пĕр пĕччен тăрса юлма тата хăйĕн влиянине пĕтĕмпех çухатса пĕтерме пултарать. США Францие çакăнпа хăратать те ĕнтĕ.

Вашингтонра калаçусем пуçланнă вăхăтра «Стар» хаçат хăйĕн вулакансене: «Францин наци пухăвĕ хирĕçме пултарнине шута илсе», США, тен, «Хĕвеланăç Германи правительствине... çĕнĕрен хĕçпăшалланас ĕçе тытăнма ирĕк пама» хатĕр пулĕ, тесе шантарса каланă.

Швецире тухса тăракан «Стокгольмс тиднинген» хаçат çапла çырать: «Франци лару-тăрăвĕ тата ытларах йывăрланма пултарать, мĕншĕн тесен ăна халĕ... икĕ енчен хĕсме пуçлассине кĕтме пулать...».

Вашингтонра пулса иртнĕ калаçусен тĕп шухăшне тулашри суту-илӳ ыйтăвĕсем çинчен калакан пайра та палăртнă.

Калаçусем вĕçленсенех Германире тухса тăракан хаçатсем çак ыйту пирки Аденауэр ĕçне: вăл «Хĕвеланăçпа Хĕвелтухăç хушшинчи суту-илĕве чарса тăрас» тĕлĕшпе «тума кирлĕ мĕнпур мерăсем йышăнма» обязательство илни пулать, тесе хакларĕç. Паллах, çакнашкал обязательствăран Америка монополийĕсем кăна усă курма пултараççĕ. Хĕвеланăç Германие илес пулсан, вăл хăйĕн хĕвелтухăçĕнчи кӳршисемпе суту-илӳ тăвас пулсан, Америкăран хаклă хакпа топливо, апат-çимĕç тата сутăнмасăр выртакан таварсем илсе килессинчен хăтăлнă пулĕччĕ. Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсемпе суту-илӳ туни, мирлĕ промышленность отраслĕсене аталантарма пулăшса, Хĕвеланăç Германири миллионшар ĕççыннисене ĕç тупма май панă пулĕччĕ.

Пĕлтерӳрен çакă та курăнать: Аденауэр тата Америкăри пуç пулса тăракан ушкăнсем Германи пĕрлĕхне туса хурассине пур майсемпе те чăрмантарма хатĕр пулнине тепĕр хут çирĕплетсе пачĕç. Çак ыйту пирки ниме пĕлтермен тĕлсĕр сăмахсем кăна калани ăнсăртран пулман ĕнтĕ. Пĕтĕм Германи правительстви туса хурасси çинчен тата Германипе мирлĕ договор тăвасси çинчен вара пĕр сăмах та каламан.

Çапла ĕнтĕ Аденауэр Вашингтонра хăйĕн халăхĕн интересĕсене тата тепĕр хут сутса ячĕ.

Çак калаçусем Франципе уйрăмах хытă сехĕрлентерсе ӳкерчĕç. Францири реакциллĕ буржуази хаçачĕсем те: Франци хăйĕн чапне çухатрĕ, вăл халĕ ĕнтĕ США-па Англи куçĕнчен пăхса тăракан çĕршыв çеç мар тата Хĕвеланăç Германи тĕлĕшĕнчен те çавăн пек çĕршыв пулса тăчĕ, тесе уççăнах çыраççĕ. Хаçатсем çырнă тăрăх, Франципе Германи хушшинчи çыхăнусем йывăрланса пыраççĕ. Аденауэр «Европа çарĕ» тенĕскерне, чи малтан, «çухатнă территорисене каялла тавăрмалли» хĕçпăшал вырăнне хурать, тесе сехĕрленсе çырнисене хаçатсенче час-часах курма пулать. Франци халăхĕ мирлĕ политикăшăн кĕрешни вăйланса пынине кура, реакциллĕ ушкăнсем те «Европа çарĕ» çинчен Парижра çырса хатĕрленĕ договора Франципе ырламаççĕ, тесе шутлаççĕ.

Паллах ĕнтĕ, империализм лагерĕнчи хирĕçӳсем малашне те вăйланса пырĕç. Кунпа пĕрлех халăхсем хушшинче империализмла политикăна хирĕç кĕрешесси ӳссе, сарăлса, вăйланса пырать. Совет Союзĕ Германи ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелеме тăрăшать, çак политикăна Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенче ытларах та ытларах чĕререн ырласа йышăнаççĕ. Ку тĕлĕшпе нумаях пулмасть нимĕç буржуазийĕн хаçачĕ «Аахенер нахрихтен» çырни уйрăмах паллă. Аденауэр США-ра пулнă чухне тухса каланă сăмаха сивлесе, хаçат çапла çырать: «Мускав Германи тĕлĕшпе тата пĕтĕм тĕнчери мир тĕлĕшпе тытса пыракан мирлĕ политикăран тухса тăракан майсемпе усă курманни, çакăн пек майсене хĕреслĕ поход идейисем айне туса хуни ытла та ответсăр ĕç пулнă пулĕччĕ».

ХИРĔÇӲСЕМ ӲССЕ ПЫРАÇÇĔ

Нумаях пулмасть Парижра Хĕвеланăç Европăри империализмла государствăсен представителĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу «пĕрлĕхлĕ ялхуçалăх рынокĕ» тенĕскерне туса хурасси çинчен сӳтсе явнă. Анчах çакăн пек хăтланса пăхнинчен нимĕн те тухман. Çакă вăл империалистсем хушшинче пысăк хирĕçӳсем пурри çинчен калать.

«Пĕрлĕхлĕ ялхуçалăх рынокĕ» тенĕскерне туса хурассине пуçаракансен шучĕпе, унта кĕрекен çĕршывсен ялхуçалăх производствине пĕрлештермелле тата кашни çĕршыв ялхуçалăхĕн пĕр-пĕр отраслĕ енĕпе аталанса пымалла. Çакăн пек туса хурас шухăш вăл, чăннипе илсен, «Европăри çĕркăмрăкĕпе хурçă пĕрлешĕвĕ» тенĕскерне туса хунă идейăран тухса тăрать. Буржуалла хаçатсем кун пирки уççăнах çаплах çырнă: «Европăри çĕр кăмрăкĕпе хурçă пĕрлешĕвĕн» империалистсем туса хуракан «Хĕвеланăç Европа çарĕ» валли хĕçпăшал тăратмалла пулсан, «пĕрлĕхлĕ ялхуçалăх рынокĕн» çав çар валли апат-çимĕçпе чĕртавар парса тăмалла.

«Пĕрлĕхлĕ ялхуçалăх рынокĕ» тенĕскерне туса хуни Европăпа Америкăри ялхуçалăх монополийĕсене те усă панă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен вĕсене хăйсен таварĕсене вырнаçтарма çĕнĕ рыноксем кирлĕ. Хальхи вăхăтра Европăри чылай çĕршывсем ялхуçалăх кризисне тӳссе ирттереççĕ.

Парижра пулнă канашлăва ирттерме питĕ тĕплĕн хатĕрленнĕ пулнă. Иртнĕ çулхи март уйăхĕнче канашлăва хатĕрленме ятарласа комитет туса хунă. Çак комитет ĕçне 17 çĕршыв представителĕсем, вăл шутра Англи, Франци, Итали, Хĕвеланăç Германи, Голланди тата франкистла Испани представителĕсем те хутшăннă. Анчах малтанхи кунсенчех канашлура пысăк хирĕçӳсем сиксе тухнă.

Канашлура Франци представителĕсем, хăшпĕр çĕршывсен представителĕсемпе пĕрле, ялхуçалăх производствине организацилес тĕлĕшпе хăйсен планне сĕннĕ. Çак план тăрăх, Хĕвеланăç Европăри ялхуçалăхĕн тĕп отраслĕсене мар, хăшпĕр отраслĕсене кăна, сăмахран, эрех, улма-çырла, сĕт-çу, сахăр тăвас ĕçсене кăна пĕрлештермелле.

Голланди представителĕсем пачах урăхла çул тытнă. Голланди хăй туса хатĕрлекен мĕнпур ялхуçалăх продукчĕсенчен 40 процент таран ют çĕршывсене сутса тăрать. Çавăнпа та ăна тулашри рыноксем кирлĕ. Çакна шута илсе, Голланди представителĕсем Хĕвеланăç Европăри пĕтĕм ялхуçалăхне тата унăн продукчĕсене вырнаçтарас ĕçе пĕтĕмпех пĕрлештерессишĕн тăнă. Ялхуçалăх продукчĕсене сутас тĕлĕшпе Голланди Европăри таможня союзне туса хума сĕннĕ. Çав вăхăтрах Англи, Швейцари, Норвеги консультативлă орган туса хурсан çитет, тесе шутланă. Çак органăн «наци рынокĕсен уйрăмлăхĕсене палăртса тăмалла». Ытти çĕршывсен представителĕсем ялхуçалăх продукчĕсем кӳрсе килессине пӳлсе тăракан тарифсене пĕтерсе лартассине тататăлăн хирĕç тăнă. Канашлура ытти йышши хирĕçӳсем те палăрнă. Голланди представителĕ Мансхолт каланă тăрăх, канашлу «тĕттĕм вырăнта аташса çӳренĕ», вăл нимĕнле сĕнӳ те хатĕрлеме пултарайман.

Империализмла блок организаторĕсем пуçарнă çĕнĕ ĕç çакăн пек путланса ларни капитализмла государствăсен экономика тĕлĕшпе пысăк йывăрлăх тӳсни çинчен калать. Çак йывăрлăх вăл Хĕвеланăç Европăри çĕршывсем демократилле çĕршывсемпе суту-илӳ тума пăрахнă пирки пулса тăнă. Тĕнчери капитализм рынокĕ ытларах та ытларах хĕсĕнсе пырать. Çак рынокра тавар сутмалли условисем начарланнăçемĕн начарланаççĕ. Çавăнпа та канашлу ĕçĕ ăнăçлă пулма пултарайман.

ВĂРÇĂ ХАТĔРЛЕНЕС ÇУЛПА ПЫНĂ ПИРКИ

Апрелĕн 10-мĕшĕнче Грецире вăрçă хыççăнхи вăхăтра пиллĕкмĕш хут ĕнтĕ укçа хакне улăштарнă (девальваци тунă). Халĕ ĕнтĕ драхма ют çĕршывсен валютинчен икĕ хут йӳнерех тăрать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах çĕршыва таварсем кӳрсе килес енĕпе тунă чăрмавсене тата ют çĕршывсене таварсем сутнăшăн паракан премисене пĕтерсе хунă.

Çакнашкал ĕçсем çĕршыв пурнăçне начарлатмасăр иртме пултарман. Греци хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, укçа хакне улăштарнă хыççăн çĕршывра экономика питех те начарланса çитнĕ. Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакĕсем хăвăрт ӳссе пыраççĕ. Рынокра спекуляци пуçланнă. Афинăра тухакан хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, таварсен хакĕ çитес сывăх вăхăтра 1,5—2 хут ӳсмелле. Грецири ĕççыннисене тата та йывăртарах пурнăç кĕтет.

Пĕрлĕхлĕ демократилле сулахай партин исполкомĕ укçа хакне улăштарнă пирки ятарласа кăларнă пĕлтерӳре çапла çырнă:

«Правительство туса ирттерекен ĕçсем ĕççыннисен пурнăçĕ çине çĕнĕрен уççăн таланни пулса тăраççĕ. Çак ĕçсем финанс олигархине пуйтарма пулăшаççĕ, халăхшăн пысăк йывăрлăх кӳреççĕ».

Драхма хакне улăштарни ют çĕршыв капиталне пысăк услам парать, вăл Греци экономикинче пĕтĕмпех хуçа пулса тăрать. Укçа хакĕ йӳнелни Греци çĕршывне ют çĕршыв монополийĕсен колонилле хӳрешки туса хурать.

Драхмăна йӳнетни — Америка империализмĕн урапине кӳлĕннĕ Грецири пуç пулса тăракан ушкăнсен политикинчен тухса тăнă ĕç. Вăл Греци экономики питех те начарланса çитнине пĕлтерет. Агрессилле Çурçĕр Атлантика блокĕ валли тухакан пысăк çар расхочĕсем Греци хуçалăхне аркатса çитерне.

Нумаях пулмасть Грецин финанс министрĕ Папаянис: государство бюджетĕнчен 53 процент çар ĕçне каять, тесе пĕлтернĕ. «Атлантика союзĕ умĕнче илнĕ обязательствăсене пурнăçланă май» çав расход тата ытларах ӳсет. Греци хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, юлашки 4 уйăх хушшинче кăна çар расхочĕсем 34 миллиард драхма таран ӳснĕ. Çав вăхăтрах бюджет дефицичĕ 900 миллиард драхмăна çитнĕ. Ку вăл Грецишĕн нихăçан пулман пысăк цифра. Папаянис каланă тăрăх, Грецире çын пуçне тивекен наци тупăшĕ Хĕвеланăç Европăри ытти çĕршывсенчен 4 хут пĕчĕкрех.

Правительство органĕсем пĕчĕклетсе пĕлтернĕ тăрăх та Грецире рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçи, вăрçăченхипе танлаштарсан, çурри чакнă, çав вăхăтрах налогсем юлашки 4 çул хушшинче 75 процент ӳснĕ. Çĕршер пин çын ĕç тупаймаççĕ. Çак фактсем вĕсем Грецире хальхи вăхăтра власра тăракан ушкăнсен политики Греци халăхне хирĕç пыракан политика пулни çинчен калаççĕ. Çав политикăн пĕртен-пĕр тĕллевĕ—империалистсене услам кӳресси, вĕсене вăрçă енĕпе авантюрăсем тума пулăшасси пулать.

А. АЛЕКСАНДРОВ.

США-ри забастовкăсем

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Америка хаçачĕсем çĕршыври ĕççыннисен забастовкăлла кĕрешĕвĕ вăйланса пыни çинчен пĕлтереççĕ.

Лейк-Саксесри «Сперри гироскоп» компанире ĕçлекен рабочисен 12 пин çынлă забастовки пулса иртнĕ. Ку компанире ĕçлекенсем электричествăпа радио промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзне кĕреççĕ. Забастовка чылай ăнăçлă иртнĕ, компани хуçисем ĕç укçи ӳстерме палăртакан договора ырлама тивнĕ. Рабочисем çавăн пекех «улшăнакан шкала» çинчен калакан пункта та договортан кăларттарнă. Çак пункт тăрăх, правительство органĕсем хушнипе рабочисене ĕç укçи катса пама пултарнă.

Нью-Йоркри «Мейсис» универсальнăй магазинĕсенче ĕçлекен сакăр пин служащи забастовка тунă. Забастовка тăвакансем çĕнтернĕ, служащисене ĕç укçи хушса памалла тунă. Вĕсен ытти чылай требованийĕсене те тивĕçтермелле тунă.

«Дейли уоркер» хаçатăн Луисвилри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: нумаях пулмасть «Интернейшнл харвестер компани» предприятийĕсенче ĕçлекен 3.400 рабочи забастовка туса ирттернĕ. Вĕсем электричествăпа радио промышленноçĕнчи рабочисен Пĕрлешӳллĕ профсоюзĕнчи 75 активиста тата профсоюзăн ытти работникĕсене ĕçрен кăларса яниве хирĕç протестленĕ.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Пальюври (Кентукки) 1.800 платник забастовка тунă. Вĕсем ĕç укçи ӳстерме палăртакан контракт çине хуçасене алă пустарнă.

РУМЫНИРЕ ÇĔНĔ ХУЛАСЕМ ТĂВАÇÇĔ

БУХАРЕСТ, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири телеграф агентстви çапла пĕлтерет:

Румыни Халăх Республикинче çĕнĕ хуласем ӳссе çитĕнеççĕ. Авалхи Хунедоара хули сывăхĕнче халĕ икĕ çĕнĕ хула ӳссе ларнă. Хунедоара хулинчи ĕлĕкхи металлурги завочĕ—халĕ Г. Георгиу-Деж ячĕпе тăракан металлурги комбиначĕ палламалла мар улшăннă.

Кăçал кунта çăкăр завочĕ тума тытăнаççĕ, ачасен диспансерĕ уçăлать, больницăна пысăклатаççĕ. Хулара çавăн пекех çĕнĕ парк пулать, культура çурчĕ тата икĕ кинотеатр тума тытăнаççĕ.

1952 çулта кăна Хунедоара хулинче рабочисем 370 хваттер илнĕ. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта рабочисем валли 100 хваттер ытла туса пĕтернĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян пĕлтернинче çапла каланă: иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем Пхамдон районĕнче Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 6 самолетне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Корей Халăх çарĕн тата Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсемпе Америкăпа Англи интервенчĕсем тата Ли Сын Ман çарĕсем хушшинче пур фронтсенче те пĕчĕк çапăçусем пулса иртнĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

Корейăра перемири тăвасси çинчен калаçусем пуçлас ыйту пирки

ПЕКИН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тăрăх, Корейăпа Китай делегацийĕ паян çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

Икĕ енĕн сыхăну ушкăнĕсем тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен апрелĕн 11-мĕшĕнче килĕшӳ тунăранпа тата тепĕр енĕ калаçу ирттерессине тепĕр вăхăта хăварма сĕннĕренпе пилĕк кун иртрĕ. Сыхăну ушкăнĕсен штаб офицерĕсен ларăвĕнче Корейăпа Китай енĕ, Корейăпа Китай енĕн сыхăну ушкăнĕн пуçлăхĕ панă инструкци тăрăх, тепĕр енĕн ларура пулнă штаб офицерĕсенчен тепĕр енĕн сыхăну ушкăнĕн пуçлăхне çакăн çинчен аса илтерме ыйтнă: апрелĕн 11-мĕшĕнче тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен килĕшӳ тунă хыççăн, сыхăну ушкăнĕсен ларăвĕнче Корейăпа Китай енĕ перемири тăвасси çинчен калаçусем пуçласа ямалли куна палăртас тĕлĕшпе тăракан ыйтăва халех сӳтсе явма тата лару ирттермелли куна палăртма ыйтнă. Корейăпа Китай енĕ çакна пĕлесшĕн: çак куна палăртас тĕлĕшпе тăракан ыйтăва сӳтсе явма тепĕр енĕ хăçан хатĕр пулать? Тепĕр енĕн штаб офицерĕсем çак ыйту çинчен хăйсен сыхăну ушкăнĕн пуçлăхне халех пĕлтерме пулнă.

Ларура икĕ енĕ те аманнă тата чирлĕ çар çыннисене улăштарса илекен ушкăнсен ĕçне тĕрĕслесе тăмалли вырăн тăвасси çинчен тăракан ыйтăва, çавăн пекех тата Паньмыньчжоньри калаçусен районĕнче куçса çӳренине тĕрĕслесе тăмалли вырăн тăвасси çинчен тăракан ыйтăва тĕпчесе вĕреннĕ. Апрелĕн 16-мĕшĕнче кăнтăрла икĕ енĕн штаб офицерĕсем пĕрле Паньмыньчжоньри калаçусен районĕнче тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене йышăнма организацилекĕ пунктсене тĕрĕслесе тухнă.

Президент Эйзенхауэр тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Президент Эйзенхауэр Америкăри хаçат редакторĕсен обществинче тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх сăмах тухса каланă. Хальхи вăхăтра «мĕнпур халăхсем валли тӳрĕлĕхлĕ мир туса хурас шанăç» малти вырăна тухса тăнине палăртса, Эйзенхауэр пуринчен ытла США правительстви вăрçă хыççăнхи çулсенче тытса пыракан тулашри политикăна, вăл шутрах васкаса хĕçпăшал хатĕрленине те, Çурçĕр Атлантика блокĕ туса хунине те тӳрре кăларма пăхнă. Тĕнчери лару-тăру йывăрланса çитнĕшĕн вăл пĕтĕм айăпа Совет Союзĕн политики çине йăвантарма пăхнă. Анчах çак шухăша çирĕплетсе пама вăл пĕр факт та илсе кăтартма пултарайман.

Президент Эйзенхауэр: «тĕнчери çĕршывсен правительствисем енчен хăйсен шухăшĕсене ăнланмалла та тӳррĕн каласа пама вăхăт çитрĕ», тенĕ.

Совет Союзĕн руководителĕсене чĕнсе, президент Эйзенхауэр хăйĕн сăмахĕнче тĕнчери мĕнпур ыйтусене татса пама хăйĕн программине палăртнă. «Çак тавлашуллă ыйтусенчен пĕри те—вĕсем пысăк пулсан та, пĕчĕк пулсан та—ытти мĕнпур çĕршывсен прависене хисеплеме шухăш пулсан, татса памалла мар ыйтусем пулмаççĕ», тесе тата «Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăйсене тивĕçлĕ тӳпе йышăнма хатĕр», тесе шантарса каланă.

Анчах çав вăхăтрах президент Эйзенхауэр Китай çинчен тата унăн наципе прависене хисеплесси çинчен тăракан ыйту пирки, çавăн пекех тата Потсдамра йышăннă килĕшӳ тăрăх пĕрлĕхлĕ Германи туса хурас ыйту пирки нимĕн те каламан.

Президент Эйзенхауэр каланă тăрăх, «пĕр-пĕрне шанса тăрасси тĕрекленсе пынă май «тепĕр пысăк ĕçе—хальхи вăхăтра тĕнче тӳсекен йывăрлăха—хĕçпăшалсене чакарас ĕçе тытăнма пулать. Çак тĕллевпе эпир чаплă сăмах парса тунă мĕнпур килĕшӳсене саламланă пулăттăмăр тата вĕсемпе килĕшнĕ пулăттăмăр. Кунта çак ыйтусем кĕме пултарĕччĕç:

1. Мĕнпур çĕршывсен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе хăрушсăрлăх çарĕсен пысăккăшне, вĕсен абсолютнăй хисепĕ тăрăх е вĕсен тĕнчери шайĕ çинчен каласса татăлнă тăрăх, ӳстерме чарасси;
2. Стратегилле хăшпĕр материалсен пĕтĕм продукцийĕн вăрçă тĕллевĕ валли уйăрса хуракан пайĕшĕн, килĕшсе татăлнă тăрăх, мĕнпур çĕршывсем пĕр виçе туса хума обязательство йышăнасси;
3. Атом энергийĕпе мирлĕ тĕллевсемшĕн кăна усă курмалла тăвассине пулăшма тата атомлă хĕçпăшалпа усă курма чармалла тунине пурнăçлама пулăшма пĕтĕм тĕнчере атом энергине тĕрĕслесе тăмалла тăвасси;
4. Ытти йышши хăватлă хĕçпăшалсен хисепне ӳстерме чарасси е вĕсемпе усă курма чарасси;
5. Каласса татăлса çавăн пек чармалла тунисене пурне те тивĕçлĕ гарантисем пулăшнипе пурнăçа кĕртмелле. Пĕрлешнĕ Нацисем ертсе пынипе ĕçлекен инспекцин практикăлла системи те çавăн пек тума пулăшмалла».

Президент хĕçпăшалсене чакарас пирки тăракан кирлĕ те пысăк ыйтусем тĕлĕшпе пĕтĕмĕшле асăрхаттарусем кăна тунă, «хĕçпăшалсăрланмалли программăн конкретлă ыйтăвĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ тата вĕсем хăйсен характерĕ тĕлĕшĕнчен кăткăс ыйтусем», тесе палăртнă.

Пакистан правительстви вырăнтан тухнă

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Карачирен пĕлтернĕ тăрăх, Пакистан генерал-губернаторĕ Гулям Мохаммед Пакистан премьер-министрне Хваджу Назимуддина вырăнтан кăларнă.

Пакистан премьер-министрĕ пулма генерал-губернатор Пакистанăн США-ри хальхи посолне Мохаммед Али Чоудхурие уйăрса лартнă, ăна çĕнĕ правительство туса хума хушнă.

КАРАЧИ, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Пакистанри радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер каçхине Пакистанăн çĕнĕ правительстви присяга панă.

Çĕнĕ правительствăна çаксем кĕреççĕ: Мохаммед Али Чоудхури, Абдул Кайюм-хан, Зафрулла-хан, Муштак Ахмед Гурмани, Ш. Куреши, А. Г. Брохи, А. М. Малик, Хусейн Куреши, Сардар Бахадур-хан.

ГОМИНДАН БАНДИСЕМ БИРМĂРА КИРЕВСĔР ĔÇСЕМ ТĂВАÇÇĔ

ДЕЛИ, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс оф Индиа» хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Чан Кай-ши бандисем Кенг-Тунгран 50 миля кăнтăр-хĕвелтухăç енче Бирма самолетне персе ӳкернĕ. Бирма çарĕпе тинĕс-çар флотĕн 12 офицерĕ пĕтнĕ.

Рангунран илнĕ пĕлтерӳре каланă тăрăх, Бирма правительстви гоминданăн Тайван утравĕ çинчи ушкăнне хăйсен çарĕсене Бирма территорийĕнчен Таиланд урлă илсе тухма е капитуляци тăвасси çинчен приказ пама хушнă.

КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ВАШИНГТОНРИ ОРГАНИЗАЦИЙĔН РУКОВОДИТЕЛĔСЕНЕ СУД ТĂВАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Сиэтлран пĕлтернĕ тăрăх, унта Коммунистсен партийĕн Вашингтонри организацийĕн çичĕ руководительне суд тума пуçланă. Вĕсене иртнĕ çул Смит законĕ тăрăх арестленĕ.

РСФСР-ти футболистсен ăмăртăвĕсем

Футбол вăййипе РСФСР-та мала тухмалли ăмăртусем ирттермелли йĕркене çирĕплетнĕ. Футбол командисен ăмăртăвĕсем виçĕ тапхăр пулса иртеççĕ. Малтан физкультура коллективĕсен командисем хуласенче, облаçсенче, крайсенче тата автономиллĕ республикăсенче мала тухассишĕн ăмăртса выляççĕ. Çав ăмăртусенче мала тухнă футбол командисем вунă зонăра пулакан ăмăртусенче тĕл пулаççĕ. Ăмăрту ирттермелли зонăсем çаксем: Инçет Хĕвелтухăç, Çĕпĕр, Урал, Çурçĕр, Центрти пĕрремĕш, Центрти иккĕмĕш, Анатри Атăл, Вăтам Атăл, Кăнтăр тата Мускав çывăхĕ. Вунă зонăра пулакан ăмăртусенче мала тухнă командăсем юлашкинчен пулакан ăмăртусене хутшăнаççĕ.

Футбол вăййи енĕпе «РСФСР кубокне» илмелли ăмăртусем çуллахи сезонти чи массăлла ăмăртусем пулаççĕ. Çак ăмăртусене пинпер команда хутшăнать. Çамрăксен командисем те «РСФСР кубокне» илессишĕн ятарласа ăмăртса вылямалла пулать. (ТАСС).

Хула кубокне илессишĕн

Апрелĕн 12-мĕшĕнче Шупашкарта шахмат енĕпе хула кубокне илессишĕн ирттерекен ăмăрту пуçланчĕ. Пурĕ 16 команда ăмăртса вылять.

Турнирăн малтанхи пайĕнче «Динамо» спорт обществин командипе Чăвашсен педагогика институтĕнчи иккĕмĕш команда тĕл пулчĕç. «Динамо» команди 4:1 шутпа çĕнтерчĕ.

Художество училищин команди Чăвашпромсоветăн командипе вылярĕ. Тĕлпулу 3:2 шутпа художество училищин команди çĕнтернипе вĕçленчĕ.

Чăвашсен ялхуçалăх институтĕн команди чĕлха фабрикинчи шахмат командипе тĕл пулчĕ. Ăмăртура ялхуçалăх институтĕнчи спортсменсем 4:1 шутпа çĕнтерчĕç.

Ăмăрту малалла пырать.

Атăл çинче

Шупашкар тĕлĕнче Атăл шывĕ апрелĕн 17-мĕшĕнче 91 сантиметр, апрелĕн 18-мĕшĕнче 5 сантиметр хушăннă. Çапла вара Атăл шывĕ пĕлтĕр çуркунне пулнинчен 1 метр та 23 сантиметр ытларах хăпарнă.

Ĕнер ирхине 8 сехет тĕлне сывлăшра 8 градус, шывра 0,5 градус ăшă пулнă.

Ĕнер ирхине 7 сехетре Шупашкар тĕлĕнчен Горькире тунă çĕнĕ самоходка «Ростов» иртсе кайрĕ. Вăл Сталинграда каять.

Апрелĕн 17-мĕшĕнче «Ударник Потапов» катер Атăл урлă пассажирсем каçарма тытăнчĕ. Вăл кашни кунах ирхине 5 сехетрен пуçласа каçхине 12 сехетчен ĕçлет.

Шупашкар пристанĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 19-мĕшĕнче Горькирен пассажирсем лартса çӳрекен «Володарский» пăрахут Астрахане кайма тухать. Вăл Шупашкара ыран çитмелле. Ун хыççăн «Волга», «Тургенев» тата ытти пăрахутсем те килеççĕ.

Редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — апрелĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла вырăсла спектакль **«Богатырский сказ»**; апрелĕн 20-мĕшĕнче каçхине вырăсла спектакль **«Твое личное дело»**. Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхи спектакль 20 сехетре пуçланать.

КИНО

«РОДИНА» — апрелĕн 19-мĕшĕнче 10 сехетре **«Близнецы»**; ытти сеанссенче **«Любовь Яровая»**, 12, 16 тата 20 сехетре—пĕрремĕш сери, 14 сехетре, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехетре—иккĕмĕш сери. Апрелĕн 20-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре **«Вратарь»**, ытти сеанссенче юлашки кун **«Любовь Яровая»**, 16 тата 20 сехетре—пĕрремĕш сери, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехетре — иккĕмĕш сери.

«УДАРНИК» — апрелĕн 19-мĕшĕнче **«Свинарка и пастух»**, апрелĕн 20-мĕшĕнче **«Чапаев»**.

Промышленноçпа строительствăра ĕçлеме рабочисем пухакан кантур пĕлтерни

Чăваш республикинчи оргнабор кантурĕ Электростанцисемпе электропромышленность министерствин Иркутск хулинчи стройкисенче, Строительство материалĕсем тăвакан промышленность министерствин Чкалов облаçĕнчи Ново-Троицк хулинчи предприятийĕсенче тата «Чувашлес» трестăн вăрманпромхозĕсенче (Чăваш АССР-ĕнче) ĕçлеме рабочисем пухать. Кантур специальность пĕлекен çынсене те, специальность çук çынсене те ĕçлеме ярать.

Электростанцисемпе электропромышленность министерствин стройкисенче ĕçлеме кайма договор тунă рабочие каялла таврмалла мар пĕр вăхăтлăх пулăшу 500 тенкĕ параççĕ; Строительство материалĕсем тăвакан промышленность министерствин предприятийĕсенче ĕçлеме каякана 300 тенкĕ, «Чувашлес» трест вăрманпромхозĕсенче ĕçлеме каякана—150 тенкĕ параççĕ. Ĕçлеме кайнă чухне çул çинче пулнă вăхăтра кашни талăка 10—15 тенкĕ укçа параççĕ. Çул укçи тӳлеттермеççĕ. Рабочи пуçне 240 килограмм тата çемьери кашни çын пуçне 80 килограмм багаж илсе кайма укçа тӳлеççĕ.

Ĕçлемелли вырăна çитсен çемьеллĕ рабочисене хваттер параççĕ, пĕччен çынсене общежитири пӳлĕме вырнаçтараççĕ, сĕтел-пукан, пӳлĕмре кирлĕ ытти япаласем те параççĕ. Рабочие вырăна çитсен пĕр талăк хушшинче договорта кăтартнă ĕçе вырнаçтараççĕ.

Ĕçлеме каясси çинчен тĕплĕрех ыйтса пĕлме тата ĕç договорĕ тума райисполкомсем çумĕнчи уполномоченнăйсемпе инспекторсем патне, Шупашкар хулинче—Заводской урамри 34-мĕш çурта пымалла.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ОРГНАБОР КАНТУРĔ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-20, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-09, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НІ 21978 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.